24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ФЕВРАЛЬ
8
ВЫРСАРНИКУН
33 (6058) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Хĕрарăмсене колхозсенчи ертсе пыракан ĕçсене хăюллăнрах лартар

Тăхăр çул каярах, колхозник-ударниксен Пĕтĕм Союзри Пĕрремĕш Съездĕнче Сталин юлташ çапла каланă: «Колхозсенче хĕрарăмсем — пысăк вăй пулса тăраççĕ... Пирĕн обязанность — колхозсенче хĕрарăмсене малалла ӳстерсе пырасси, çав вăй ĕçе кĕртесси пулать».

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви çак çулсем хушшинче колхозсенче хĕрарăмсене воспитани парас тата вĕсене малалла ӳстерсе пырас тĕлĕшпе питĕ нумай ĕçсем турĕç. Миллионшар колхозницăсем артелĕн общественлă хуçалăхне кунран кун çирĕплетсе пыраççĕ, унăн пуянлăхĕсене пысăклатаççĕ. Пултаруллă пиншер те пиншер хĕрарăмсем колхозсенче ертсе пырас ĕçе тăчĕç, бригадăсене, звеносене, выльăх-чĕрлĕх фермисене ертсе пыма, колхозсенче счетовод пулса ĕçлеме тытăнчĕç. Колхозницăсем хушшинче вăйлă тырпул тăвакан паллă мастерсем те, выльăх-чĕрлĕхе пăхма пĕлекен пысăк мастерсем те сахал мар. Çавăн пек хĕрарăмсен ĕçĕсене совет правительстви тивĕçлĕ хак пачĕ.

Совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă условийĕсенче хĕрарăмсем йышăнса тăракан вырăн татах та пысăкланчĕ. Колхозниксенчен пĕр пайĕ фронта тухса кайнă. Колхозниксенчен нумайĕшĕсем, кирлĕ самантра совет воинĕсен ретне тăма хатĕр пулас тесе, çар ĕçне вĕренеççĕ. Колхозсем умне ответлă çĕнĕ задачăсем — фронтпа çĕршыва продовольствипе ялхуçалăх чĕрттаварĕсем ытларах та ытларах туса парас задачăсем тухса тăчĕç. Халĕ ялта тĕп работниксем пулса тăракан хĕрарăмсем çине пысăк ĕçсем тиврĕç. Хĕрарăмсем, колхоза юлнă арçынсемпе пĕрле, хăйсенчен тăван çĕршыв мĕн ыйтнине пурне те тивĕçлипех туса парас тесе, мĕнпур вăя хурса ĕçлеççĕ. Советăн мухтавлă патриоткисем хăйсен примерĕпе, тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсемшĕн тăван амăшĕсем пек тăрăшнипе мĕн чухлĕ чĕрене хавхалантарса çуламлантарчĕç! Вĕсем, фашистла вăрă-хурахсене çĕнтерес тесе, питĕ паха, тепĕр чухне палăрмасăрах юлакан мĕн чухлĕ ĕçсем тăваççĕ!

Колхозлă ялта хĕрарăм тума пултарайман пĕр ĕç те çук. Вĕсем Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ трактористсен, комбайнерсен, шоферсен, МТС-сенче, совхозсенче машинăсем юсакан рабочисен вырăнне тăрса, тăрăшсах машинăсене вĕренсе пыраççĕ. Вĕсем фронта кайнă колхоз руководителĕсен вырăнне йышăнчĕç, халĕ те йышăнса пыраççĕ. Сăмахран, Новосибирск облаçĕнчи Тогучински районра вăрçă пуçлансан малтанхи уйăх хушшинчех 12 хĕрарăма колхоз председателĕсене суйланă; 100 хĕрарăм ытла Хĕрлĕ Çара кайнă бригадирсен, выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсен вырăнне йышăннă. Бурят-Монголин чи аякри Баргузински аймакĕнче хăйĕнче кăна вăрçă вăхăтĕнче 50 хĕрарăм выльăх-чĕрлĕх фермисене ертсе пыма тытăнчĕç; 9 хĕрарăма колхоз председателĕсем пулма суйласа лартнă.

Фашистла бандăсем вăхăтлăха оккупациленĕ, халĕ Хĕрлĕ Çар ирĕке кăларнă районсенчи активистка-колхозницăсем питĕ йывăр испытание чăтса ирттернĕ. Солнечногорск районĕнчи (Мускав облаçĕ) Исаковски колхозăн председателĕ Зайцев юлташ вăрçă пуçлансан малтанхи кунсенчех фронта тухса кайнă. Артель председателĕ пулма рядовой колхозницăна Антонина Цыгановăна суйланă. Колхозниксем ăна суйласа йăнăш туман. Цыганова юлташ çине тăрсах ĕçе тытăннă. Нимĕç оккупацин йывăр кунĕсенче вăл хăйне хăй паттăррăн тыткаланă. Фашистсене хăваласа янă хыççăн Цыганова юлташ хăвăрт, нимĕн тăхтаса тăмасăрах, хуçалăха йĕркелеме тытăннă. Исаковски колхоз халĕ ĕнтĕ çуракине валли пур вăрлăхсене те хатĕрлесе хунă.

Партизансен отрячĕсене хутшăннă колхозницăсенчен нумайĕшĕсем тăшмана тата унăн техникине нимĕн шеллемесĕр пĕтерсе пынă. Вĕсене, тăшмана хирĕç хăюллăн кĕрешнĕскерсене, колхозниксем халĕ колхозсене ертсе пырас ĕçе суйлаççĕ.

Вăрçă кунĕсенче колхозницăн политикăллă тата производствăри активлăхĕ калама çук ӳсрĕ. Анчах та хăшпĕр вырăнсенче çак вăя ирĕке тухма кансĕрлесе тăраççĕ. Районсенчи хăшпĕр организацисем çынсем çитмеççĕ тесе ӳпкелешеççĕ. Вĕсем хăйсем малашнехине курма пултарайманнине тӳрре кăларас шутпа, колхозсенчи ертсе пыракан кадрсен пĕр пайĕ Хĕрлĕ Çара кайни çинчен калаççа лараççĕ. Ĕçри пысăк çитменлĕхсем çавăн пирки пулса пыраççĕ тесе ăнлантарма тăрăшаççĕ вĕсем.

Çакăн пек руководительсем ялта пултаруллă, ӳссе пыракан çынсем нумай-[...] колхозницăсем ответлă ĕçсене лартмалли пысăк резерв пулса тăнине асăрхамаççĕ.

Ĕç çине, колхозăн общественлă пурлăхĕ çине юратса пăхакан, малта пыракан колхозницăсем, стахановкăсем кĕске срокрах япăх мар организаторсем, колхозсен, выльăх-чĕрлĕх фермисен лайăх руководителĕсем пулма пултараççĕ. Чăнах та ĕнтĕ, колхозри çамрăк руководительсенчен нумайĕшĕсен, çав шутрах хĕрарăмсен те, çителĕклĕ опыт çук, анчах та опыт вăл ĕçлесе илмелли япала пулни пуриншĕн те паллă. Партипе совет организацийĕсен, МТС политотделĕсен ертсе пыракан ĕçе суйласа лартнă хĕрарăмсене кунсеренех пулăшса, вĕрентсе, воспитани парса пымалла.

Час-часах çапла та пулкалать: çĕнĕ работнике пĕр-пĕр ĕçе суйласа лартаççĕ те, ун çинчен часах манса каяççĕ, унăн ĕçĕпе интересленме пăрахаççĕ. Тепĕр чухне урăхла та пулать: юлташа вăхăтра пулăшу памасан, йывăр самантсенче ăна хавхалантармасан, канаш парса пулăшмасан, унăн ĕçĕ япăхланма тытăнать. Çамрăк работниксен малтанхи утăмĕсене сăнаса пынă çĕрте, вĕсемпе интересленнĕ, вĕсен çитменлĕхĕсене вăхăтрах палăртса, çав çитменлĕхсем çине большевикла кăтартса панă çĕрте, пулма пултаракан йăнăшсене малтанах асăрхаттарнă çĕрте çынсем опыт пухса пыраççĕ, вĕсен хăйсен вăйне ĕненесси çирĕпленсе пырать, кунта вара работниксем хăйсене панă ĕçе çирĕппĕн алла илсе пыраççĕ.

Районри организацисен руководителĕсен, МТС политотделĕсен начальникĕсен пур колхоз председателĕсене те лайăх пĕлсе тăмалла, вĕсенчен кашниех мĕн тума пултарнине, вĕсене мĕнле пулăшу пама кирлине пĕлмелле. Çынсемпе курнăçса калаçасси, вĕсене тăтăшах ĕçре тĕрĕслесе пырасси — акă мĕн çитмест партипе советсен вырăнти нумай организацийĕсене. Хăшпĕр районсенче колхоз кадрĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе районри е темиçе колхозри работниксене пĕрле пухса канашлусем туса ирттерни те çителĕклĕ тесе шутлаççĕ. Паллах ĕнтĕ, канашлусем, уйрăмах лайăх хатĕрленсе ирттернĕ канашлусем усăлли çинчен калама та кирлĕ мар. Анчах ĕç пĕр кун çинче кăна мар-ха. Колхозăн кашни руководителĕпе уйрăмăн ĕçлемелле.

Колхоз кадрĕсене чăн-чăн большевикла ертсе пырас вырăнне тепĕр чухне администраторла приказсемпе хутсем урлă кăна ертсе пыраççĕ, çынсене нимĕн сăлтавсăрах пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçараççĕ. Çакă ĕнтĕ работниксене пĕр вырăнта хăнăхса ĕçлеме памасть, колхозсене тĕреклетсе пырас ĕçе чăрмантарать. Халăх шанчăкне тӳрре кăларнă, çĕнĕ ĕçре хăйсен пултарулăхĕсене кăтартнă колхозницăсемшĕн тимлĕн тăрăшмалла, вĕсене ертсе пыракан ĕçре çирĕплетсе, ӳстерсе пымалла.

Çураки çывхарса килет. Ку çураки вăрçă условийĕсенче çывхарса килет. Халĕ ĕнтĕ мĕнпур тракторсемпе, машинăсемпе, лашасемпе, çын вăйĕсемпе туллин усă курса уйри ĕçсене вăхăтра тата отлично туса хăварас задача тăрать. Хĕрарăмсем — колхоз председателĕсем, бригадирсем, звеньевойсем, колхозри ытти кадрсем пекех, çуркунне йывăр экзамен тытаççĕ. 1942 çулти тухăçлă тырпулшăн пыракан кĕрешӳ ăнăçлă пуласси ĕнтĕ вĕсем колхозниксене организацилеме пĕлнинчен, колхозри мĕнпур резервсемпе тĕрĕс усă курма пĕлнинчен килет.

Çуракине хатĕрленмелли татăклă кунсем пуçланчĕç. Вăрлăхсене, ялхуçалăх ĕçхатĕрĕсене, лашасене, вăкăрсене çураки валли пĕтĕмпех хатĕрлесе çитермелле. Бригадăсемпе звеносене йĕркелесе çирĕплетсе хумалла. Хĕрарăмсене колхоз ĕçне активлăн хутшăнма май парас тесе, ача яслисемпе площадкисем çинчен те халех шухăшламалла. Хальхи вăхăтра яллă районсенчи партипе совет организацийĕсемшĕн, МТС-сен политотделĕсемшĕн килес çуракине пур енчен те кăтартуллăн хатĕрленсе кĕтсе илес задачăран пахарах задача çук та.

Сталин юлташ фронта пулăшу парассине вăйлатасси çинчен панă кăтартăва пурнăçа кĕртес тесе, колхозницăсем — тăван çĕршывăн шанчăклă хĕрĕсем — мĕнпур вăйран тăрăшса ĕçлеççĕ. Хамăрăн тăван çĕршывăн ырă пурнăçĕшĕн пыракан çак хастарлă ĕçре колхозлă ĕçĕн çĕнĕрен те çĕнĕ геройнисем çуралса пыраççĕ, колхозлă яла ертсе пыракан çĕнĕ кадрсем çитĕнсе пыраççĕ. Çак кадрсем ĕнтĕ колхоз вăйĕн хăватлă вучахĕ, пур йывăрлăхсене те çĕнтерме пултаракан вăйсен хăватлă вучахĕ пулса тăраççĕ.

(«Правда», февралĕн 6-мĕшĕнчи передовой статья).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 6-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 6-мĕшĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Противник техника тĕлĕшĕнчен, уйрăмах чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен, питĕ пысăк çухатусем тӳсет. Пирĕн чăçсем татах малалла куçнă.

Февралĕн 5-мĕшĕнче противникăн 34 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 6-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен 7 самолетне персе антарнă.

* * *

Февралĕн 5-мĕшĕнче пирĕн авиаци чăçĕсем нимĕçсен 13 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 180 лавне, 35 орудине прислугисемпе пĕрле, горючи тултарнă 7 автоцистернине, зенитнăй пулеметсен 6 точкине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, чугунçул çинчи 36 вагона çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине 4 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Фоканов командирăн чăçĕнчи подразделенисенчен пĕри (Хĕвеланăç фрончĕ), халăх пурăнакан Г. пунктне тытса илсе, тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне стройран кăларнă тата противникăн 2 танкне пĕтерсе тăкнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн батальон, противника кĕтмен çĕртен атакăласа, нимĕçсене пĕр çирĕплетнĕ пит кирлĕ пунктран хăваласа кăларнă, хăваласа кăларнă чухне пулеметсен 15 точкине пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсен 115 вилли выртса юлнă.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чăçсем противникăн йывăçпа çĕртен тунă 8 огневой точкине, 45 блиндажне çĕмĕрсе тăкнă, 2 орудине, 13 станковăй пулеметне тата нимĕçсен темиçе наблюдательнăй пунктне пĕтерсе хунă. Гитлеровецсен 900 салтакĕпе офицерĕ вилнĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Пархоменко юлташ командир пулса ертсе пыракан кавалеристсем тăшман пехотин пĕр батальонне тата 5 танк пĕтерсе тăкнă, халăх пурăнакан 4 пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Пĕр уйăх хушши çапăçса, Боуков майор нимĕçсен виçĕ самолетне — «Юнкерс-88», «Мессершмитт-109» тата «Хейнкель-113» йышши самолечĕсене персе антарнă. Çав вăхăтрах Боуков юлташ тăшманăн пехота ларса пыракан 20 автомашинине, горючи тултарнă цистернине пĕтерсе тăкнă тата зенитнăй пулеметсен 6 точкине çапса сиенленĕ.

* * *

Килов лейтенантăн танковăй экипажĕ тăшманăн оборони ăшне çĕмĕрсе кĕнĕ те темиçе блиндажа тата 3 орудине пусарса çĕмĕрнĕ, 50 нимĕçе яхăн пере-пере вĕлернĕ.

* * *

Политрук Ностечко юлташ тăватă красноармеецпа пĕрле противникăн окопĕсене çĕмĕрсе кĕнĕ те нимĕçсен виçĕ салтакне тата пĕр офицерне штыкпа чиксе вĕлернĕ. Çав пилĕк паттăр пурĕ 14 гитлеровеца вĕлернĕ, икĕ ручной пулемет тата темиçе винтовка тытса илнĕ.

* * *

Харьков партизанĕсен С. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ темиçе кун хушшинче тăшманăн боеприпассем хунă складне, икĕ станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă тата 17 нимĕç оккупантне вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен 14-мĕш мотопехотнăй дивизийĕн 2-мĕш полкĕнчи 1-мĕш батальонăн аркатса тăкнă штабĕн хучĕсем хушшинче 3-мĕш бронетанковăй группăн командующийĕ генерал Гейнгард панă приказăн копине тупнă. Çав документ çакна кăтартса парать: Хĕрлĕ Çарăн войскисем ăнăçлăн наступлени туса пынипе Германи войскисенче дисциплина питĕ хытă чакнă, çынсем çухалса кайнă, паникăна ӳкнĕ. Приказра çапла каланă: «14-мĕш мотодивизи каялла чакнă чухне эпĕ колоннăсемпе пĕрле пыракан унтер-офицерсемпе салтаксене, действующи чăçсенче усă курма юрăхлăскерсене, нумай тытса чартăм. Эпĕ çакăн пек савăнтармалла мар картина куртăм: унтер-офицерсемпе салтаксем хурсă шлемсемсĕр, хĕçпăшалсемсĕр пыраççĕ, хăйсене пĕртте салтак пек тыткаламаççĕ, честь памаççĕ... Эпĕ çапла тума хушатăп: пур подразделенисенче те каялла чакма пуçланăрашпа унтер-офицерсемпе рядовойсенчен кам-кам шута илме тивĕçлĕ сăлтавсăр действующи [...] сенче пулманнине лайăх тĕрĕслесе палăртмалла. Хăйсен чăçĕсенче [...]нисене пурне те военнăй суд аллине памалла. Салтаксем юри хăйсен чăçĕсенче пулманнине кăтартса пама йывăр пулсан, ун пек чухне вĕсене çийĕнчех тытса чармалла та, вĕсене вара хытă сăнаса тишкерсе тăмалла. Çавăн пек салтаксене хăйсен службин тăрăх тумалли ĕçсемсĕр пуçне уйрăмах йывăр ĕçсене тутармалла. Вĕсене тивекен продовольствипе укçаран пĕр пайне катса юлмалла. Кашни полкра тата кашни батальонра штрафной командăсем тума сĕнетĕп. Эпĕ çак кăтартса панисене пĕр пăркаланмасăр çирĕппĕн пурнăça кĕртессине кĕтсе тăратăп. Ку ĕçсемшĕн ответ тытаканнисем — дивизисен командирĕсем. Малта кăтартса панă пек ĕçсем темиçе хутчен пулсан, офицерсен хĕçпăшалпа усă курмалла. Çак приказ çинчен халь салтаксене пĕлтермелле, ăна 10 кун хушшинче кашни кун строй умĕнче вуласа памалла».

Гитлерăн çухалса кайнă генералĕн çак приказĕ нимĕçсен командованийĕн хăйĕн салтакĕсене итлеттерес, пăхăнтарса тăрас тесе драконла мерăсем йышăнма тивнине питĕ те уççăн кăтартса парать. Анчах та Гитлерăн çарĕ арканма тытăннине нимĕнле мерăсем те, чи хăрушă та чи хаяррисем те, тытса чарма пултараймаççĕ.

* * *

Пирĕн войскăсем пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕç ирсĕрĕсем «Победа» колхозра (Орел облаçĕ) 80 киле çунтарса янă. Гитлеровецсем нумай колхозниксене персе тата асаплантарса вĕлернĕ. Вĕлернисем хушшинче çаксем пур: Л. К. Грызлова, П. С. Грызлов, Н. С. Грызлов, А. К. Замышляев.

* * *

Нимĕçсен Польшăри Седлец хулинче тăракан батальонĕн салтакĕсем, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта каймалли çинчен приказ илсен, казармăсенчен тухма отказ панă та икĕ офицера арестленĕ. Казармăна вара штурмовиксен отрячĕ çавăрса илнĕ. Кашни пиллĕкмĕш салтака çавăнтах персе вĕлернĕ. Ыттисене тĕрмене хупнă.

* * *

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра упăшкипе ывăлĕ вилни çинчен пĕр вăхăтрах икĕ хыпар илсен Витшток хулинче (Бавария) вак сутăçăн çемьи хăйне хăй вĕлернĕ. Витшток хулинче вырăнти полици декабрьпе январь уйăхĕсенче 74 çын хăйне хăй вĕлернине палăртнă.

Февралĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла бандисене хирĕç активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн танксен чаçĕ, наступлени тăвакан пехотăна пулăшса пырса, противникăн огневой точкисене пусара-пусара лартнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла стройран кăларнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче Белобородов юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардеецсем, халăх пурăнакан питĕ те кирлĕ икĕ пунктшăн çапăçса, 600 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брюханов подполковникăн гвардейски чаçĕнчи артиллеристсем (Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки 15 кун хушшинчи çапăçусенче, пехотăпа пĕрле малалла куçса тата тăшман оборонине пĕтерсе пырса, нимĕç миномечĕсен 15 батарейине, 4 блиндажа тата противникăн оборона тумалли ытти сооруженийĕсене пĕтерсе тăкнă. Артиллерирен тĕл персе нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр пин çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Поленков лейтенант ертсе пыракан красноармеецсен ушкăнĕ, нимĕçсен чакса пыракан обозĕ çине гранатăсем ывăтса, тăшманăн 12 салтакне пĕтерсе тăкнă тата нумай трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Батальон комиссарĕн связнойĕ Алехов красноармеец, çапăçури задание пурнăçа кĕртнĕ хыççăн хăйĕн чаçне таврăннă чухне, батальонăн тылне кĕрсе кайма хăтланакан нимĕç автоматчикĕсене асăрханă. Хăюллă боец винтовкăран пеме пуçланă тата, «малалла, юлташсем, пĕтерер çĕлен-калтасене», тесе кăшкăрса, нимĕçсем çине ывтăннă. Гитлерла автоматчиксем каялла тарма тытăннă, иккĕшĕ вилсе юлнă.

* * *

Украинăра, Р. станцийĕ патĕнчи вăрманта, итальянецсен кавалери эскадронĕ канма вырнаçнă пулнă. Тăшман ăçта вырнаçса тăнине совет партизанĕсем хăйсен разведчикĕсем урлă пĕлнĕ те противника атакăлама йышăннă. Партизансен отрячĕ хĕссе пынине итальянецсем чăтса тăрайман, вăрманта 47 виле тата хĕçпăшалсемпе лашасем нумай хăварса, каялла тарнă.

* * *

Эсэсовецсен «Адольф Гитлер» ятлă дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Эрих Гортвих çапла каласа панă: «Пирĕн дивизире 9.000 çын пулнă. Хальхи вăхăтра 2.500 е 3.000 çын кăна юлнă. Вĕсенчен çапăçма пултараканнисем 1.500—1.600 çын кăна. Материальнăй чаçсем енĕпе те пысăк çухатусем пулчĕç. Вăтамран илсен, кашни стрелковăй рота вуншар пулемет çухатнă. Кашни ротăра 20 яхăн тĕрлĕ машинăсем пул-

Вĕçĕ 4-мĕш страницăра

Н. А. ВОЗНЕСЕНСКИЙ ЮЛТАШ

СССР Верховный Совет Президиумĕн, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ тăрăх Н. А. Вознесенский юлташа Оборонăн Государственнăй Комитечĕн составне кĕртнĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн начальствующи тата рядовой составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командовани боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене Ленин орденĕпе «Золотая звезда» медалĕ парса Совет Союз Геройĕн званине парас:

1. Старшинана Иван Дмитриевич **Вежливцева**.
2. Красноармееца Петр Иванович **Голиченкова**.
3. Политрук заместительне Александр Александрович **Калинина**.
4. Лейтенанта Николай Андреевич **Козлова**.
5. Старший сержанта Степан Петрович **Лоскутова**.
6. Сержанта Владимир Николаевич **Пчелинцева**.
7. Старший лейтенанта Федор Федорович **Синявина**.
8. Красноармееца Феодосий Артемьевич **Смелячкова**.
9. Лейтенанта Федор Фролович **Фомина**.
10. Кĕçĕн лейтенанта Михаил Иванович **Яковлева**.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарăн начальствующи составне орденсемпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командовани боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн çаксене наградăлас:

ЛЕНИН ОРДЕНĔПЕ

1. Бригаднăй комиссара Георгий Павлович **Романова**.
2. Генерал-майора Николай Павлович **Симоняка**.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ ОРДЕНĔПЕ

1. Полковника Андрей Матвеевич **Андреева**.
2. Полковника Сергей Тимофеевич **Биякова**.
3. Генерал-майора Георгий Климентьевич **Буховеца**.
4. Батальоннăй комиссара Шуль Зиновьевич **Векслярские**.
5. Генерал-майора Николай Александрович **Гагена**.
6. Подполковника Борис Алексеевич **Городецкие**.
7. Батальоннăй комиссара Яков Васильевич **Завалишина**.
8. Генерал-майора Никифор Матвеевич **Замировские**.
9. Подполковника Василий Иванович **Золотарева**.
10. Полковой комиссара Петр Иванович **Калашникова**.
11. Полковника Александр Алексеевич **Кичкайлова**.
12. Генерал-майора Емельян Васильевич **Козика**.
13. Полковника Анатолий Андреевич **Краснова**.
14. Батальоннăй комиссара Петр Яковлевич **Ксенца**.
15. Полковника Григорий Гаврилович **Кузнецова**.
16. Танковăй войскăсен генерал-майорне Вацлав Брониславович **Лавриновича**.
17. Майора Николай Константинович **Макарова**.
18. Полковника Герасим Васильевич **Мухина**.
19. Полковника Георгий Федорович **Одинцова**.
20. Полковника Федор Ефимович **Петрова**.
21. Полковой комиссара Степан Антонович **Петрушина**.
22. Полковника Александр Абрамович **Самсонова**.
23. Полковника Николай Васильевич **Смирнова**.
24. Генерал-майора Александр Васильевич **Сухомлина**.
25. Бригаднăй комиссара Василий Андреевич **Сычева**.
26. Генерал-майора Иван Иванович **Федюнинские**.
27. Бригаднăй комиссара Михаил Алексеевич **Хлызова**.
28. Генерал-майора Владимир Иванович **Щербакова**.
29. Полковника Вячеслав Петрович **Якутовича**.

ХĔРЛĔ ÇАЛТĂР ОРДЕНĔПЕ

1. Старший батальоннăй комиссара Василий Михайлович **Арсеньева**.
2. Старший батальоннăй комиссара Федор Иванович **Базанова**.
3. Полковой комиссара Павел Петрович **Казьмина**.
4. Полковника Михаил Петрович **Лебеде**.
5. Батальоннăй комиссара Лев Рафаилович **Ломберга**.
6. Старший батальоннăй комиссара Дмитрий Иванович **Смирнова**.
7. Батальоннăй комиссара Федор Лукьянович **Яремчука**.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂН ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Ленин орденĕ

Ленин вилнĕ чухне вăл ача пулнă, ун çинчен вăл нимĕн те астумасть; анчах те пĕчĕк Сеня калама вĕреннĕ чи малтанхи сăмахсенчен пĕри—«Ленин» пулнă. Вăл Ленина портретсем çинче палласа илнĕ те, ун çинче, паллакан сын çине пăхнă пекех, савăнăçлăн пăхса йăл кулнă.

Нумай калрахпа ашшĕ тата аслă пиччĕшĕсем ăна миллионшар çынсене иртĕклĕ те телейлĕ пурнăç патне илсе çитерекĕ çынăн пурнăçĕ çинчен каласа панă.

Унтан вăл хăй Ленин çинчен кĕнекесем вулама пуçланă. Çулсем иртнĕ, вăл Ленинăн аслă идейисене ăнланма тытăннă. Унăн мĕнпур пурнăçĕ Ленин ячĕпе çыхăнса пынă. Вăл Ленинла комсомол ретне кĕнĕ те часах комсомол ячейкин чи хĕрӳллĕ агитаторĕсенчен пĕри пулса тăнă.

Ылттăн пек илемлĕ сĕркунне ăна çемьи çара ăсатса янă. Вăл хĕвеллĕ Молдавирен, Тираспольтен, инçе çула—Рязаньри пехотнăй училищĕне тухса кайнă. «Эсĕ, Семен, хĕрлĕ командир пулăн,—тенĕ ватă Иосиф Львовский.—Манăн ывăлăм лейтенант пулассине эпĕ ĕмĕтленме пултарнă-ши? Малалла, Семен, полковник, тен, генерал та пулăн!» Старик пуçне сулланă та ывăлне куç хĕссе илнĕ. Амăшĕ, ватă амăшĕ, нимĕн те каламан. Вăл хăйĕн юратакан ывăлне хытă ыталаса илнĕ те хăйĕн çепĕç те шывлă куçĕсемпе нумайччен ун çине пăхса тăнă.

Вăл хăйĕн ашшĕ-амăшĕсене урăх курайман. Вăрçă пуçлансанах партин Тирасполь обкомĕ Рязаньри пехотнăй училищĕн курсантне Семен Иосифович Львовские çапла пĕлтернĕ: унăн ашшĕне нимĕçсем вутта пăрахса çунтарса янă, шиччĕшĕсене персе пăрахнă, аппăшĕсене пусмăрласа мăшкăлланă, амăшĕ ухмаха ерсе кайнă, тенĕ.

Курсант Семен Львовский хаваслă та шухă качча пулнă. Халĕ унăн çамрăк вăхăчĕ иртсе кайнă. Лейтенант Семен Львовский халĕ ĕнтĕ малтанхи шухăшсăртарах та чарусăртарах курсантран темиçе çул аслăрах пек курăннă. Кăкăр çинчи кăсъери комсомол билечĕ хушшинче вăл çемьи пĕтни çинчен илнĕ пĕлтерĕве чиксе çӳренĕ.

Ăна разведка командирĕ туса хунă. Разведкăн тĕп вăйĕ Донбасс шахтерĕсем—коммунистсемпе комсомолецсем: Василий Валболов, Григорий Варепя, Андрей Приходько, Ной Гогечкори, Израиль Водовозов пулнă. Вĕсем палах та пĕр-пĕринпе пĕр евĕрлĕ пулман: Валболов хаваслă та йăл кулакансăр, Водовозов шухăшлă та ĕмĕтленекенскер пулнă. Комсомолец-командир вĕсене ĕçе пĕр харăс тăвакан çирĕп коллектива пĕтĕçтернĕ: «Пĕри пурăшшĕн те, пурте пĕришшĕн!»—çакăн пек пулнă вĕсен лозункĕ.

Вара вĕсем çапăçăва кĕрсе кайнă. Львовские кĕтмен çĕртенех полковник чĕнсе илнĕ. Полковник çак çамрăк лейтенанта юратнă, унăн боевой ĕçĕсемшĕн савăннă.

— Яла кайма пултаратăр-и?—тесе ыйтнă полковник.

— Каятпăр, полковник юлташ.

Семен Львовский хăйĕн разведчикĕсене çапăçăва ертсе кайнă. Противник питĕ хаяррăн персе тăнă вăхăтра вĕсем яла çĕмĕрсе кĕнĕ; гранатăсемпе, пульăсемпе, штыкпа нумай фашистсене çапа-çапа кăларнă. Львовский чи хăрушă вырăнсенче пулнă. Ăна темиçе хутчен те амантнă; тăнлаври суранран юхакан юн унăн куçне хупласа лартнă, анчах çапах та вăл çапăçуран тухман. Нимĕçсене ялтан хăваласа кăларса янă. Семен Львовские 16 çĕртен: 6 хут пульăпа, 10 хут осколокпа амантнă. Ăна полковник патне илсе пынă. Вăл, нумай юн çухатнăскер, вилес патнех çитнĕскер, носилка çинче кăшт çĕкленнĕ те: «Полковник юлташ,— тенĕ кăшт çеç илтĕнмелле,—эсир панă приказа пурнăçа кĕртнĕ».

Хурăнăн сарăлнă çулçисем витĕр сентябрь уйăхĕнчи питех ăшă маман хĕвел тĕксĕмĕн çутатнă. Разведчиксем уçланкăра выртнă. Боецсем хушшинче ларакан парторг Варепя хăйĕн тăван Донбасне коллективлă çыру çырнă.—Çирĕп тытăнса тăрăр,—тесе çырнă парторг горняксем патне.—Эпир хамăр та тăван Донбаса намăс кăтартмăпăр. Парнесемшĕн тав тăватпăр. Донбасран маррисем те сирĕн пата хĕрӳллĕ салам ярăççĕ.

— Парторгпа юнашар икĕ тус-разведчик Труба тата Приходько тăнă. Вĕсем парторг хулпуççийĕ урлă пăхса, çырури кашни сăмахах сасăпа вуласа пынă. Израиль Водовозов нумаях та пулмасть госпитальрен тухса килнĕ Ной Гогечкорипе темĕн çинчен пăшăлтатнă.—Пирĕн паттăр лейтенант, эсир ун çинчен пĕлетĕр, сывалса тухать те татах пирĕнпе пĕрле пулĕ; вăрçă чарăннă хыççăн эпир хамăр районри чи лайăх шахтăна лейтенант ятне парăпăр. Çапла-и, тусăмăрсем?—тесе ыйтнă парторг разведчиксене пăхса çавăрăнса.—Çапла!—тенĕ ăна хирĕç пĕр харăс Трубапа Приходько. Коля Волков та, Израиль Водовозов та, Ной Гогечкори те, Сейлибай Вайтулов та:

— Çапла! — тесе каланă.

Львовский вилмен. Шăпах январь уйăхĕнчи наступлени пуçланас умĕн вăл хăйĕн разведчикĕсем патне таврăннă. Вăл вĕсене çĕнĕ çапăçусене, паттăрла çĕнĕ ĕçсемпе çĕнĕ çĕнтерӳсем тума илсе кайнă. Фронтăн военнăй совечĕ коммунист Львовский юлташа Ленин орденĕпе наградăларĕ. Тăшманăн пульли гимнастеркăпа комсомол билетне тата тăванĕсене вĕлерни çинчен пĕлтернĕ çырăва шăтарса кайнă вырăнта, шăпах ĕнтĕ çав вырăнта пирĕн çĕршыв хăйĕн чи лайăх ывăлĕсене наградăлакан чи аслă орден—Ленин орденĕ йăлтăртатса тăрать.

Ал. ИСБАХ.

СОВЕТ СОЮЗĔН ГЕРОЙĔ И. Д. ВЕЖЛИВЦЕВ

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн СССР Верховный Совет Президиумĕн 1942 çулти февралĕн 6-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх **И. Д. Вежливцев** старшинана **Совет Союз Геройĕн** званине панă.

И. Д. Вежливцев снайпер Ленинград фронтĕнче 31 фашиста пĕтерсе тăкнă.

Б. УТКИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсем

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 5-мĕш (ТАСС). Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă рядовой тата начальствующи составăн пысăк группине фронтăн Военнăй Совечĕ орденсемпе тата медальсемпе наградăланă. Наградăланă хăшпĕр геройсен боевой ĕçĕсем çинчен каласа паратпăр.

Юханшывăн çӳллĕ çыранĕнче ларакан К. ялне нимĕçсем хирĕç тăмалли çирĕплетнĕ пункт туса хунă, Кунтан юханшыв та, тепĕр çыран та лайăх курăннă. Ялта блиндажсемпе ДЗОТ-сен хисепĕ çуртсен хисепĕнчен икĕ хут ытларах пулнă. Вĕсен амбразурисем юханшыв еннелле пăхса ларнă, çӳремелли окопсенче огневой точкăсем туса хунă. Нимĕçсен батальонĕ çирĕплетнĕ çав вырăнта хĕл каçма шутланă. Çак кунсенче совет войскисем К. ялĕ патĕнче çĕр ăшне чавса кĕрсе ларнă фашистсене атакăланă. Пирĕн боецсене нимĕçсен позицийĕсенчен 300—400 метр хушши уçă вырăн уйăрса тăнă. Атака сигналне артиллеристсем панă. Оруди командирĕ Костин красноармеец хăйĕн оруди расчечĕпе пĕрле 152 миллиметрлă орудие уçă позицине илсе тухнă та тăшманăн пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсем татти-сыпписĕр персе тăнă вăхăтрах нимĕçсен блиндажĕсене тӳрĕ тĕллесе персе арката-арката тăкнă. Çиеле витнĕ пĕренесем, цемент муклашкисем, тăпра сывлăшалла сирпĕнесирпĕне хăпарнă. Тĕл персе Костин юлташ противникăн пысăк ДЗОТ-не, 2 туппине пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн пулеметчикĕсемпе автоматчикĕсем кĕрсе ларнă 4 çурта аркатса тăкнă. Костин юлташăн артиллеристĕсемпе ыттисен паттăр ĕçĕ Н. ялĕшĕн пынă çапăçăва татса панă. Урамсенчи кĕске çапăçу пирĕн боецсен татăклă çĕнтерĕвĕпе вĕçленнĕ. Нимĕçсем тарма тытăннă. Фашистсен гарнизонĕн çуррине вырăнтах пĕтерсе тăкнă, 70 нимĕçе ялтан тухса тарнă чухне пĕтнĕ. Тарса тухма ĕлкĕрнĕ гитлеровецсенчен те нумайĕшĕсем таврари вăрмансенче шăнса вилнĕ.

Фронтăн Военнăй Совечĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Костин красноармееца Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Нимĕçсем çирĕплетнĕ А. ялĕшĕн пынă çапăçу вăхăтĕнче кĕçĕн лейтенант Гудзовский комсомолец миномет ротин командирĕ пулса кĕрешнĕ. Минометчиксем, стрелоксен наступленине пулăшса пырса, хăйсен мĕнпур боеприпасĕсене персе пĕтернĕ. Пулăшу киличчен вăхăт нумай иртнĕ пирки пирĕн наступлени чарăнса ларма пултарнă. Противникăн пусарса лартнă огневой точкисем татах чĕрĕлнĕ. Питĕ вăйлăн пенипе совет пехотинецĕсене çĕр çумне лапчăтса лартнă. Вара кĕçĕн лейтенант Гудзовский минометчиксене мала илсе тухнă та, «Тăван çĕршывшăн, малалла!» тесе кăшкăрса, вĕсене атакăна кайма çĕкленĕ. Минометчиксем хăйсен командирĕ хыççăн атакăна кĕрсе кайнă. Вĕсен примерне кура, стрелоксем те атакăна çĕкленнĕ. Нимĕçсен гарнизонĕ—унта фашистсем 400 çын ытла пулнă—атакăна чăтаймасăр тарма тытăннă. Тепĕр çур сехетрен халăх пурăнакан А. пункт пирĕн боецсен аллине куçнă. Хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн кĕçĕн лейтенант Гудзовский юлташа та Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă.

Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланисем хушшинче фашистсен психикăллă атакине сирсе пăрахнă старший лейтенант Чулков, ротăна ертсе пырас ĕçе икĕ хутчен хăй аллине илсе, ăна атакăна ертсе кайнă красноармеец Савинский, разведчиксен взводĕн командирĕ Зорин, хăйĕн боецĕсемпе пĕрле тăшманăн темиçе ДЗОТ-не пĕтерсе тăкнăскер, 313 хутчен вĕçсе разведка туса çӳренĕ летчик Катаев тата ыттисем те пур.

„СС" батальонне аркатса тăкни

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 3-мĕш. (ТАСС). Çапăçу хирĕнче темиçе сехет ĕнтĕ çил-тăман кĕрлет, мĕнпур çулсемпе сукмаксене пурне те юр хӳсе лартать, анчах та пирĕн мухтавлă воинсем пĕр чăрмавсăр малалла пыраççĕ. Татти-сыпписĕр снарядсем, минăсем çурăлаççĕ. Орудисенчен персе тăнипе пĕтĕм тавралăх кĕрлет. Çапăçу кунĕн-çĕрĕн пырать. Пирĕн боецсем тăшман коммуникацийĕсене татса кĕреççĕ, тăшманăн опорнăй пункчĕсене çавăрса илеççĕ, совет çĕршывĕ çине кĕрсе кайнă нимĕç оккупанчĕсене ним шеллемесĕр пĕтере-пĕтере тăкаççĕ.

К. ялĕшĕн пынă хаяр çапăçура пирĕн пĕр подразделени нимĕçсен «СС» дивизийĕнчи 4-мĕш пехотнăй полкăн 3-мĕш батальонне аркатса тăкрĕ. Каç пулас умĕн подразделени нимĕçсене çĕнтерсе яла хăй аллине тытса илчĕ. Урамсенче пирĕн боецсем «СС-овецсен» 100 ытла виллине тата нумай хĕçпăшал тупса пуçтарчĕç.

А. ВИКТОРОВ.

Паттăррăн утаççĕ вырăс çыннисем

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ. Вăрман. Шартлама сивĕ. Пилĕк таран ытла юр кĕрчĕсем. Вĕтĕ чăрăшлăх вăрманĕ витĕр кукăр-макăр çул выртать. Çак çул тăрăх нимĕçсем хăйсем çунтарса янă 10 ялтан пухнă стариксене, хĕрарăмсемпе ачасене пĕр 800 çынна, персе пăрахма тесе, Торопец хули еннелле хăваласа пынă. Нимĕçсен аллине лекнисем хăйсене мĕн кĕтнине, хăйсен шăпине пĕлнĕ, анчах пĕри те палачсенчен хĕрхенӳ ыйтман, мĕншĕн тесен юнĕçсен тискер кайăкран ырă кăмăллăх, хĕрхенӳ кĕтни усăсăр.

Çул çунса кăмрăкланса ларнă хапха юписемпе пĕр пĕччен тăрса юлнă кăмака мăрйисем хушшипе пырать. Пысăк ял вырăнне çакă кăна тăрса юлнă. Çак ялта фашистсем 70 çынна персе пăрахнă та ун хыççăн яла харăс тăватă енчен вут тĕртсе çунтарса янă. Кăмрăкпа кĕл куписем хушшинче асаплантарса вĕлернĕ, çунтарса янă совет çыннисен юлашкийĕсем выртаççĕ.

Çак ял пулнă вырăн урлă пирĕн пĕр наступлени туса пыракан подразделени иртсе пырать. Чарăнса тăма приказ пулчĕ. Çынсем, машинăсем, орудисем, танксем чарăнчĕç. Боецсем хăрушă вуткăвар юлашкийĕсем çине пăхаççĕ. Сивĕпе тупă кĕпçисем пасарса шуралса ларнă, анчах красноармеецсем çĕлĕкĕсене илнĕ, çара пуçăн тăраççĕ. Комиссар сăмах калать:

— Юлташсем! Нимĕçсен мĕнпур тискерлĕхĕсене шута илсе тухма та май çук. Тăшмана ним шеллесе тăмасăр çапнипе çеç хамăр халăхăн асапĕсемшĕн тавăрма пулать. Ылханлă фашистсене пĕтерсе тăкар. Малалла, юлташсем!

Боецсен урисем айĕнче юр кăчăртатать, орудисен ураписем кĕмсĕртетеççĕ, танксем кĕрлеççĕ. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕ хĕвеланăçнелле хăвăрттăн шăвать. Иртнĕ талăкра вăл тăван çĕршывăн татах тепĕр 20 километрне яхăн нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă. Автоматсемпе хĕçпăшалланнă йĕлтĕрçĕсен отрячĕсем нимĕçсене хăвăрт çавăра-çавăра илеççĕ, çулсемпе сукмаксене пӳлсе хураççĕ. Охват станцийĕ фашистсемшĕн питĕ пысăк масар пулса тăчĕ. «Ухватлар пур енчен те Охвата!» Çакăн пек сăмахсем каласа, красноармеецсем станцие пур енчен те çавăрса илнĕ, нимĕçсене гранатăсемпе арката-арката тăкса, вĕсене çирĕпленсе ларнă вырăнсенчен хăваласа кăларнă. Хăйсене пур енчен те танксем çавăрса илнĕ хыççăн нимĕçсем чиркӳ подвалне тарса кĕрсе, унтан автоматсемпе персе тăнă. Танкистсем, машинăсенчен сиксе тухса, пехотинецсемпе пĕрле подвала пырса кĕнĕ. Подвалтан пĕр нимĕç те чĕррĕн тухайман.

Лугаран иртсен пĕр вунçĕ километр хушши машинăсемпе мар, çунасемпе те иртсе кайма май çук. Пĕтĕм çула нимĕçсем ним йĕркесĕр пăрахса хăварнă урапасем, автомобильсем, тупăсем, пулеметсем пӳлсе хунă. Нимĕç çарĕн юлашкийĕсем Лугаран тухса тарма хăтланса пăхнă. Пирĕн танксем хăваласа çитнĕ вĕсене. Танксем тăшман колоннине чи варринчен таптаса тухса, ăна гусеницăсемпе лапчăтса нимĕрлесе хăвараççĕ.

Сехри хăпса тухнă нимĕçсем Лугаран пуçласа Андреаполь таранах ялсенчен вăрмана тарнă. Пирĕн йĕлтĕрçĕсем çавăрса илнĕ çулпа кайма вĕсем хăранă, анчах вăрманĕнче те вĕсене сивĕ лайăх шатăртаттарать. Вăрă-хурахсене ялтан çаратса тухнă тутăрсем, алсасем, тăласем те çăлса хăвараймаççĕ. Каçсерен нимĕçсем выçă кашкăрсем пек ял патнелле туртăнаççĕ. Вĕсем ăшăнма кĕрессшĕн, ялтан мĕн те пулин çимелли çаклатса тухасшăн, анчах нимĕн те тăваймаççĕ. Çăткăн саранчана хирĕç, ачасен аллинчен туртса илнĕ кашни çăкăр татăкĕшĕн таврăмашкăн пĕтĕм халăх çĕкленчĕ.

Андреаполь çывăхĕнче. Пирĕн çар чаçĕсем хулана йĕри-тавра çавăрса илчĕç. Андреапольрен тухса тариччен малтанхи кун 14 СС-овец хула хĕррипчи пӳрте кĕнĕ. Вĕсенчен пĕри кĕнĕ-кĕмен килхуçине ватă карчăка пуçĕнчен тĕллесе персе вĕлернĕ. Мĕншĕн? Ним айăпсăрах, вăл вырăс пулнăшăн кăна. Çак карчăка вĕлернĕ хыççăнах, пĕр çур сехетрен пулĕ, пирĕн разведчиксем çак пӳрте çавăрса илнĕ. Карчăкăн ӳчĕ сивĕнсе те çитеймен. Хĕрхенсе тăма юрать-и вара çавăн пек ирсĕр ĕç тăвакан мерзавецсене? Акă вĕсем, çынвĕлерекенсем — 14 ирсĕр, пурте вĕсем тивĕçлипе туянчĕç. Таса тавăру!

Пирĕн чаçсем Андреапольре вăрахах чарăнса тăмарĕç. Тăшмана хăваласа çитмелле кăна мар, вĕсенчен иртсе каймалла, ун çулне пӳлсе хумалла, ăна пĕтерсе тăкмалла. Боецсем Андреапольлеш енче нимĕçсене автоматсенчен, пулеметсенчен çунтарса тăрса кĕтсе илнĕ. Малалла, Торопец хули патнелле! Торопецран та иртсе кайрĕç Хĕрлĕ Çар чаçĕсем. Колоннăсенче вырăссем сивчĕ сăмахсем: «Немцы драпали из Андреаполя, а теперь торопятся из Торопца!» — тенисем илтĕнеççĕ.

Ротăсем, батальонсем утса иртеççĕ. Вырăс çыннисем, тăван çĕршыва йĕрĕнчĕк фашистсенчен тасатакансем малалла пыраççĕ. Паттăррăн утса пыраççĕ мăшкăлшăн тавăракансем. Хĕрарăмсен, ачасен юнне юхтаракан гитлерла палачсене—вилĕм!

Писатель-фронтовик К. ГОРБУНОВ.

Хăюллă артиллеристсем

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, февралĕн 5-мĕш. (ТАСС). Фронтăн Н-ски участокĕнче Матюшенко лейтенантăн батарейи фашистсене питĕ хытă аркатса пырать.

Н. ялĕ патĕнче пирĕн войскăсем çинелле тăшманăн темиçе танкĕ килме тухнă. Матюшенко юлташăн батарейи нимĕçсене вутпа кĕтсе илнĕ. Тăшманăн нумай машинисене пĕтерсе тăкнă, ыттисем каялла çавăрăнса тарнă.

Тепĕр вăхăтра халăх пурăнакан Д. пункчĕ патĕнче Матюшенко юлташăн артиллерисчĕсем, орудисенчен персе, нимĕçсен пехотин хаяр атакине сирсе пăрахнă. Снарядсене пĕтĕмпех персе пĕтерсен, Матюшенко юлташ хăйĕн батареецĕсене штыксемпе тăрса атакăна илсе кайнă. Артиллеристсем çавтери хăюллă пырса çапнине пула, тăшман, йышĕпе пирĕн боецсенчен вунçĕ хут вăйлăрах пулнă пулин те, çапăçу хирне хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен вуншар виллисене пăрахса хăварса тарнă.

Большевикла агитацие—çӳлĕ пусăма

Большевикла агитацин задачи вăл — Сталин юлташ Октябрь уявĕн кунĕсенче каланă сăмахри аслă идейăсене кашни ĕççыннине тĕплĕн ăнлантарса парасси пулать. Большевикла агитацин пĕтĕм хĕрӳлĕхне хальхи вăхăтра ĕççыннисен производстварти тимлĕхне тата политикăллă хастарлăхне çĕклес ĕçе ямалла. Çакна тума пире Сталин юлташăн историллĕ доклачĕ хушать. Производствăри тимлĕхе ӳстерни — çĕршыва кирлĕ продукцисене ытларах кăларма тата фронта васкавлăн пулăшса тăма май парать; политикăллă хастарлăха çĕклени — кашни çыннăн политикăллă ăнланăвĕпе унăн туйăмне вăйлатать.

Мĕнле туса пыратпăр-ха эпир Сталин юлташăн докладне кашни ĕççыннине тĕплĕн ăнлантарса парас ĕçсене? Ку тĕлĕшрен эпĕ Шупашкар хулинчи парторганизацисемпе агитколлективсен ĕçĕсене илсе кăтартасшăн.

Хулари 113 парторганизацирен 102 организацире Сталин юлташ докладне парти членĕсен пухăвĕсенче сӳтсе-явнă. Доклада сӳтсе-явнă май çак пухусенче ĕç тухăçне ӳстересси çинчен, производство планĕсене ытлашшипех тултарасси çинчен, вырăнти ресурссене мобилизацилесси çинчен, Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтир пухас ĕçе тата парти организацийĕсен агитациллĕ ĕçне вăйлатасси çинчен резолюцисем йышăннă.

Çавăн пекех Сталин юлташ докладне рабочисен, служащисен тата комсомолецсен пухăвĕсенче те сӳтсе-явнă.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитпункчĕ Сталин юлташ докладне ăнлантарса парас тĕлĕшпе 187 лекци туса ирттернĕ, юлашки икĕ уйăхра ку агитпункт тĕрлĕ темăпа пурĕ 790 лекци тата докладсем туса ирттернĕ. Сталин юлташ докладне ăнлантарса парас тĕлĕшпех хулари 25 организацире кăна декабрь уйăхĕнче 800 ытла калаçусем тата вулавсем туса ирттернĕ. Çаксенчен ĕнтĕ Сталин юлташăн историллĕ доклачĕ хыççăн агитаци ĕçĕ вăйлăн сарăлса кайни курăнать.

Агитаци ĕçĕсене Вăрман охранин управленинчи агитколлектив лайăх йĕркелесе янă (парторганизаци секретарĕ Сарри, агитколлектив руководителĕ Таврин юлташсем). Кунта 7 çынран тăракан çирĕп агитколлектив тунă. Агитаторсем пурте политикăна лайăх пĕлекен юлташсем. Вĕсем хăйсен информацийĕсемпе калаçăвĕсене яланах хатĕрленсе, интереслă туса ирттереççĕ. Информацисем туса панă хыççăн пухури çынсем итленĕ тема тăрăх час-часах калаçусем пуçласа яраççĕ. Ку коллективра Сталин юлташ докладне сӳтсе-явиччен Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă япаласем пухас ĕçе 4 çын çеç хутшăннă пулсан, ăна сӳтсе-явнă хыççăн 32 çын хутшăннă. Çапла вара, 4 мăшăр бурка, 1 кĕрĕк пиншак, 4 мулаххай, 1 мăшăр çăматă, 400 грамм çăм, 3 мăшăр носки тата ыт. те пухса панă. Çĕнĕ çул ячĕпе фронтри боецсем валли 600 тенкĕлĕх парне янă. Ăшă тумтир пухса парас ĕçе халĕ çĕнĕрен пуçласа янă: татах 4 мăшăр бурка, 4 мулаххай пуçтарнă.

Агитколлектив пуçарнипе стена хаçачĕ йĕркеллĕн тухса тăрать.

Çакăн пек лайăх тата йĕркеллĕн ĕçлекен агитколлективсене хулара нумай кăтартса пама пулать. Тĕслĕхе Госпланри, «Кожупряжь» артелĕнчи тата Пожарнăй охранăри агитколлективсене илме пулать.

«Кожупряжь» артелĕнче декабрьте 48 вулав тата калаçусем туса ирттернĕ. Кунти агитаторсем хăйсен калаçăвĕсене производство ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса пыраççĕ. Уйрăмăнах Ирзинпа Витюгов агитаторсем аван ĕçлеççĕ. Артель хăйĕн декабрьти планне 120 процент тултарнă.

Чапаев ячĕпе тăракан поселокра Протопопов, Голубчиков тата Громов агитаторсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем стахановла ĕçшĕн агитацилекенсем çеç мар, çав вăхăтрах тата хăйсем те стахановецсем пулса ĕçлеççĕ.

7-мĕш номерлĕ шкулти Баимкин юлташ, Çыхăну Управленинче Гинзбургпа Васильева юлташсем агитаци ĕçне юратса туса тăраççĕ.

Партин хула комитечĕн агитпункчĕ çумĕнче пгтата кĕмен лекторсемпе докладчиксем 100 çын ытла шутланса тăраççĕ. Вĕсем хушшинче П. Григорьев, Ларьков, Ильин, Запрядная, Ашмарин, Сергеев юлташсем тата ыт. те лайăх ĕçлеççĕ.

Çапла, Сталин юлташ докладне ăнлантарса парас тĕлĕшпе эпир чылай ĕçсем тунине куратпăр. Анчах, калас пулать, çулпуçĕ мĕн тума хушнисене эпир пĕтĕмпех туса çитереймен-ха.

Хальхи вăхăтра пирĕн умра çĕнĕ задачăсем тăраççĕ. Гитлерла Германие хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă çĕнĕ тапхăра кĕчĕ. Ку тапхăр пирĕн агитаторсене ĕçе йăвашлатма мар, ăна ытларах вăйлатса яма, хамăрăн агитациллĕ ĕçе лайăхлатма хушать.

Хĕрлĕ Çар активнăй оборонăран татăклă наступленине куçрĕ. Пирĕн Хĕрлĕ Çарпа Флот тăшмана темиçе хутчен те вирлĕн çапа-çапа аркатса, мухтанчăк Гитлер салтакĕсене каялла хăвалаççĕ. Тăшман Мускава çавăрса илсе йышăнма шутлани пĕтсе ларчĕ. 1942 çул — гитлерла Германие тĕппипех çапса çĕмĕрмелли çул пулса тăрать. Çапах та пирĕн çакна манма кирлĕ мар: Хĕрлĕ Çар декабрьпе январь уйăхĕсенче тунă çитĕнӳсем вĕсем гитлерла Германие тĕппипех çапса аркатассин пуçламĕшĕ çеç-ха. Умра татах та нумай йывăрлăхсем, татах та хаяр çапăçусем тăраççĕ. Çакă ĕнтĕ эпир хамăрăн ĕçре татах та нумай тӳсмеллине, нумай чăтмаллине пĕлтерет. Тăшман хăйĕн вăйĕсене пухса пирĕн чаçсем наступленине тытса чарма хăтланать. Çавăнпа та, большевикла агитацин хальхи тапхăрти задачи вăл — çав фашистла ганнибалсене хирĕç пыракан кĕрешӳре çĕнĕ çĕнтерӳсем тума пĕтĕм массăна çĕклесси пулмалла. Тунă çĕнтерӳсемпе лăпланса ларни кăшт та пулмалла мар!

Анчах та декабрьпе январь уйăхĕсенче чылай парторганизацисенче агитациллĕ ĕçе вăйсăрлатни палăрчĕ. Çакна пула чылай предприятисем хăйсен декабрьти планне тата çулталăк планне те тултараймарĕç, хăшпĕр предприятисем васкавлă заданисене тултарса çитермерĕç. Çавăн пекех тата Шупашкар хулинче ăшă тумтирсем пухасси те çителĕклĕн пымасть. Агитаципе пропаганда ĕçĕсенче час-часах партиллĕ-политикăллă ĕçри чи хĕрӳллĕ ыйтусенчен татса, уйрăммăн туса пыраççĕ.

Хлеботрестра тата Хлебокомбинатра Сталин юлташ докладне сӳтсе-явассине çиелтен çеç туса ирттернĕ. Пуху пуçтарса решенисем йышăннă пек тунă, анчах та ку решенисене пурнăçа кĕртессишĕн пĕри те тăрăшмасть. Çăкăр пĕçерекен рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва тата стахановла юхăма сарман; пĕтĕм рабочисенчен 60 процентĕ çеç хăйсен нормисене тултарса пырать. Пекарньăсенче ытти çитменлĕхсем те нумай палăраççĕ. Кунти парторганизацисен секретарĕсем, Малюгинпа Дьяконов юлташсем, рабочисем хушшинче начар ĕçлеççĕ.

Большевикла агитацие отечественнăй вăрçă кăларса тăратакан ыйтусемпе çыхăнтарса туса пымалла. Çак ĕçе кашни парторганизацин большевикла организацилемелле.

Кунта ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн агитаци ĕçĕсене ертсе пырас тĕлĕшри çитменлĕхĕсем çинчен те каламалла. Унăн агитпунктĕнче халиччен кивĕ майсемпе ĕçлесси пĕтмен-ха. Агитпункт агитаторсемпе начар çыхăнса тăрать. Агитаторсем унта сахал пырса çӳреççĕ. Лайăх ĕçлекен агитаторсен опычĕсемпе паллашмаççĕ, вăл опытсене ытти агитаторсене пама тăрăшмаççĕ. Вырăнсенчи агитаторсене пулăшу пани çук. Вĕсемпе çыхăну тытассине часчасах хут тăрăх тата телефон тăрăх çеç туса пыраççĕ. Ахальтен мар ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ партин хула комитетĕнче ку агитпункт ĕçĕсене хытă критиклерĕ.

Агитпункт ĕçне тӳрех предприятисемпе учрежденисене куçармалла; унта кулленхи массăллă агитацине конкретнăй ыйтусем тăрăх туса производствăпа çыхăнтарса пыма май килет, çакăнпа пĕрлех тата агитаторсене хăйсен ĕçĕнче практикăллă пулăшу парса пыма та майсем пур.

Агитаторсен ĕçĕсене вырăнта тĕрĕслесе вĕреннĕ хыççăн вĕсен ĕçне сӳтсе-явма хăшпĕр чух агитаторсен каçхи наспăрĕнне туса ирттермелле. Çак майпа агитаторсене практикăри конкретнăй примерсем тăрăх лайăхрах ĕçлемешкĕн вĕрентме пулать. Ĕççыннисен тĕрлĕ сийĕсем валли докладсене, калаçусене мĕнле ирттермеллине те агитпунктăн лайăх пĕлсе тăмалла, примерлă тематикăсем туса хатĕрлемелле.

Лекцисемпе докладсене тĕрлĕрен тематика тăрăх туса пыма кирлĕ. Юлашки икĕ уйăхра эпир докладсемпе лекцисене Сталин юлташăн 1941 çулти ноябрĕн 6-мĕшĕнче каланă сăмахĕ тăрăх хатĕрленĕ тематикăпа туса пытăмăр, ытти темăсене йăлтах пăрахса хăвартăмăр. Çак хушăрах вăрçă ĕçĕсем, санитарипе ПВХО тĕлĕшпе те докладсем туса пани кирлĕ пулнă. Малашне çакăнта асăннă тематикăсем тăрăх ĕçлессине те манма юрамасть. Урăхла каласан, пирĕн агитаци тĕлĕшпе тумалли лекцисен, калаçусен тата докладсен тематикине сармалла.

Çак уйăхра Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарать. Халĕ агитпунктсем доклад, лекци, калаçу тумалли темăсене хатĕрлесе хураççĕ. Анчах та кунта кашни агитаторăн, хăй мĕнле çынсем хушшинче ĕçленине астуса, хăйне юрăхлă тематикăна суйласа илмелле. Çакна агитколлектив руководителĕн хăйĕн те лайăх пĕлсе тăрас пулать.

Агитатор творчествăллă çын пулмалла. Вăл пурнăçпа тан утса пытăр. Унăн хăйне итлекен çынсем мĕн çинчен пĕлесшĕннине, мĕн ыйтнине шута илсе, вĕсене пур енĕпе те тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Пирĕн хăшпĕр организацисенче докладсемпе калаçусене нумайрах туса ирттересшĕн çеç тăрăшаççĕ, анчах та вăл докладсемпе калаçусене пысăк пахалăхпа ирттерессишĕн тăрăшмаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Докладсене, калаçусене яланах лайăх хатĕрленсе ирттерме кирлĕ. Вулавсем тунă чух вуламалли материала малтан вуласа хатĕрленсе, ăна лайăххăн, уççăн вуласа памалла; хутла сахал пĕлекен çынсем пулсан, вĕсене ăнланма йывăр сăмахсене тĕплĕн ăнлантарса парас пулать. Вулавсене, калаçусене вăхăтран вăхăта кăна мар, кăтартса хунă кунсенче е сехетсенче пĕрмаях, йĕркеллĕн ирттермелле.

Агитаторсен уйрăмăнах хăйсен суйлав участокĕ пулнă вырăнсенче пĕлсе ĕçлемелле. Ун пек участоксенче тăтă-

Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 24 çул тултарас кун çывхарса килнĕ май, ВКП(б) Шупашкар райкомĕн агитаципе пропаганда отделĕ çав куна районри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче тивĕçлипе хатĕрленсе кĕтсе илмелли плана йышăнса çирĕплетрĕ. Çакăнпа пĕрлех Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне тумалли докладсен тематикине агитколлективсемпе докладчиксене салатса пачĕ.

ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ Шапиро юлташ «Тĕрĕслĕхлĕ вăрçăсемпе тĕрĕслĕхлĕ мар вăрçăсем» темăпа икĕ доклад тата «Сталин—Хĕрлĕ Çарăн аслă полководецĕ» темăпа пилĕк доклад туса ирттерчĕ те ĕнтĕ.

Район центрĕнчи агитпункт докладчикĕ Трифонов юлташ Чкалов ячĕпе тăракан колхозра «Нимĕç фашисчĕсен Мускава çавăрса илес планĕ путланса ларни» темăпа доклад туса пачĕ.

О. Морозов юлташ «Çиçĕм» колхозра—«Тăван çĕршыва хÿтĕлесси кашни совет гражданинĕн хисеплĕ тивĕçĕ» темăпа доклад туса пачĕ. Доклад хыççăн колхозниксем Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне хамăрăн паттăр боецсем валли парнесемпе кучченеçсем: 20 чăх, 1 сысна, тулă çăнăхĕнчен пĕçерсе типĕтнĕ 2 центнер сухари т. ыт. те яма йышăнчĕç. Çакăнпа пĕрлех «Çиçĕм» колхоз членĕсем районри ытти колхозсене те хăйсем пекех Хĕрлĕ Çар валли парнесемпе кучченеçсем яма чĕнчĕç.

А. ТИМОФЕЕВ.

Агитаторсем ăнлантарнă хыççăн

КАНАШ. Вăтакас-Татмăшри агитколлектив «Динамо» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче агитациллĕ ĕçе лайăх туса пырать. Колхозниксем агитаторсене яланах ăшă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ. Агитколлектив руководителĕ Кузьмин юлташ агитаторсемпе тăтăшах канашлусем туса ирттерет.

Çак кунсенче «Динамо» тата Чкалов ячĕпе тăракан колхозсенче Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ янă нотăна колхозниксен аслă пухăвĕнче ăнлантарса пачĕç. Çакăн хыççăн «Динамо» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем тăван Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе вăйлăлатрĕç. Колхоз счетоводĕ А. Архипов 450 грамм çăм, М. Краснов пĕр тир, С. Матросов 400 грамм çăм пачĕç. Çавăн пекех Чкалов ячĕпе тăракан колхозри ватă колхозник В. Иванов та пĕр тир лырса пачĕ. Красноармеец арăмĕсем Е. Васильева, Е. Иванова, М. Никифорова пĕрер тир, Иванова Анна пĕр мăшăр алшиш пачĕç.

Т. ТУРХАН.

Учительсем—агитаторсем

ИШЛЕЙ. Ярапайкасси ялсовечĕ çумĕнчи агитаторсен коллективĕ вăрçă пуçланнăранпа чылай ĕçсем турĕ. Агитколлектива Ярапайкассинчи туллимар вăтам шкул директорĕ парти членĕ К. Тетерина юлташ ертсе пырать. Коллективра вăл хăй уйрăмăнах активлăн ĕçлет. Агитколлектив колхозри ĕçсынисем хушшинче пĕтĕмпе 20 доклада яхăн туса ирттернĕ.

Ярапайкасси шкулĕнчи кашни учитель—хастарлă агитатор. Кашни агитатора уйрăм колхоз çумне çирĕплетнĕ. Вĕсенчен Тетерина юлташ—Доронин ячĕпе тăракан колхозра, П. Яковлев—«Красная Чувашия», Ф. Дмитриева—«Автогигант», А. Васильева—«Мировой Октябрь», Т. Иванов — «Коммунизм» колхозсенче ĕçлеççĕ. Асăннă юлташсенчен кашниех хăйне панă колхозри агитаци ĕçĕсемшĕн ответ тытать.

Уйрăм агитаторсене илсен, колхозниксем хушшинче Ф. Дмитриева — 15 доклад, А. Васильева — 12 доклад, Т. Иванов — 9 доклад туса панă.

Колхозсенче мĕнле докладсем ирттерессине малтан агитаторсен коллективĕнче сÿтсе-яваççĕ. Вăхăтран вăхăта агитколлектив ялсоветĕнчи актив валли семинарсем туса ирттерет. Çапла, иртнĕ кĕркунне «Фронт тата совет халăхĕн тылĕ» темăпа тата «Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе организацилесси çинчен» икĕ семинар туса ирттернĕ. Семинарсенче çак ыйтусемпе комсомолец-агитатор, шкулта истори вĕрентекен Яковлев юлташ докладсем туса пачĕ.

Агитаторсен ĕçĕ—Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсемпе парнесем, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума укçа-тенкĕ, аманнă красноармеецсем валли кучченеçсем ăнăçлăн пухнинче тата «Цивильстрой» колхоз членĕсем чĕнсе каланине пурнăçа кĕртсе пынинче лайăх курăнса тăрать. Çавăн пекех тата агитаторсем тĕплĕн ăнлантарса панă хыççăн ялсоветĕнчи колхозниксем оборона фондне 1.450 тенкĕ укçа, 5.770 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывреç. Колхозниксем пур мероприятисене те активлăн хутшăнаççĕ. Çапла, «Красная Чувашия» колхоз членĕ М. Степанов юлташ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕтĕмпе—2 тир, пĕр сурăх, 60 тенкĕ укçа, 2 чăх, 20 çăмарта, пĕр мăшăр алса тата ыт. те пачĕ.

Агитаторсен ĕçĕ сарăлса пырать. Вĕсем пурте тăван çĕршывпа фронта пулăшассишĕн, колхозри ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Ку вăхăтра агитаторсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илес тата çитес çуракине лайăх хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

П. ЯКОВЛЕВ.

Комсомол ретне кĕреççĕ

ШАХАСАН. Енĕшри Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз çумĕнчи комсомол организацийĕ юлашки вăхăтра комсомол ретне ÿстерес тĕлĕшпе пата ĕçсем турĕ. Организаци [illegible] З. Иванов юлташ колхоз производствинче [illegible] çамрăксемпе ятарласа калаçусем ирттерет, вĕсене ĕçе явăçтарать.

Халĕ ялта комсомолецсен йышĕ [illegible]. Колхозри [illegible] И. Павлов, В. Филиппов тата В. Алексеев çамрăксем ленинла комсомол ретне кĕчĕç. Комсомол ретне кĕрекен çамрăксем хăйсен заявленийĕсенче социализмлă тăван çĕршывшăн пĕтĕм вăйĕсене хурса ĕçлеме сăмах параççĕ.

«Эпĕ çамрăк-ха. Комсомол ретне кĕрсе, [illegible] — тесе çырать çамрăк колхозник В. Алексеев юлташ.

Комсомола кĕнĕ çамрăксем колхозра [illegible].

Г. ШАШКОВ.

НИМĔÇ ОККУПАНЧĔСЕНЕ—ВИЛĔМ! Укерчĕк çинче (сулахайран сылтăмалла): сменăра 2-шер норма ытла тултарса пыракан слесарьсем—Л. Л. Кисарев, Г. В. Горохов тата В. В. Соболев юлташсем.

Л. ДОРЕНСКИЙ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Артель çĕнĕ продукци туса кăларать

Вăрçăччен Ишлей районĕнчи Сÿктер промартелĕ хуçалăхра кирлĕ япаласем—шкафсем, сĕтел-пукансем тата ытти те туса кăларнă. Отечественнăй аслă вăрçă артель умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Çĕнĕ цехсем уçăлчĕç. Çĕнĕ станоксемпе çамрăксем ытларах ĕçлеме тытăнчĕç. Халĕ артельри çамрăксем висĕ цехра васкавлă заказсене ăнăçлăн, срокра пурнăçласа пыраççĕ. Катка-пичке тăвакан, хăма çуракан, йĕлтĕрсем тăвакан тата сĕтел-пукансем тăвакан цехсем, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, февраль уйăхĕнче кашни рабочиех ĕç нормине 150 процентран кая мар тултарса ĕçлеме тата февралĕн 15-мĕш тĕлне 1000 йĕлтĕр ытла туса кăларма обязательствăсем илчĕç. Илнĕ обязательствăсене пурнăçлама пултарассине çак тĕслĕхсем лайăх çирĕплетсе параççĕ. Декабрь уйăхĕнче илнĕ васкавлă заказа артель коллективĕ кĕске срокрах 104 процент пурнăçласа панă. Ку заказа пурнăçланă çĕрте уйрăмăнах Б. Хохлов, А. Крылов тата ытти вуншар рабочисем нормăна 150-шар процент тултарса ĕçленĕ. Вĕсен примерĕпе йĕлтĕр тунă çĕрте ĕçлекен П. Кириллов, Ф. Гайкин, С. Хрисанов çамрăксем те кулленхи нормăна 150 процентран кая мар тултарса пыма пуçларĕç. Чайченко агитатор цехсенчи рабочисем хушшинче Хĕрлĕ Çар чаçĕсем пысăк çĕнтерÿсем туни çинчен, пирĕннисем тытса илнĕ трофейăсем çинчен каласа парать. Çакăн хыççăн рабочисем татах та хастарлăнрах ĕçлеме тытăнаççĕ. Февралĕн 1-мĕшĕнче воскресникре ĕçлесе, фронт валли темиçе çĕршер япала туса кăларчĕç. Ĕçлесе илнĕ 1000 тенке яхăн укçана оборона фондне куçарса пачĕç.

— Пирĕн артельре çамрăксем ытларах ĕçлеççĕ. Вĕсем фронтшăн темĕн тума та хатĕр. Каласа ăнлантар çеç вĕсене. Вăрçăччен ку профессипе пачах ĕçлесе курман çамрăксем халĕ Хĕрлĕ Çар валли паха йĕлтĕрсем, çунасем тата ытти япаласем те тума вĕренчĕç, — тет артель председателĕ Сазонов юлташ.

С. ГОРЛАНОВ.

Çĕнĕ ĕçĕн технологине вĕренсе çитрĕç

СĔНТĔР. (Телефонпа). Çатракассинчи промартельре Хĕрлĕ Çара кайнă рабочисем вырăнне çамрăк рабочисем ĕçлеме тытăнчĕç. Халĕ вĕсем, çĕнĕ ĕçĕн технологине хăнăхса çитсе, пысăк пахалăхпа ĕçлеме тытăнчĕç. Васкавлă заказа пурнăçланă çĕрте М. Ялушкин, М. Пузырева, П. Башмаков, Л. Смирнов тата ытти юлташсем те сменăри нормăна 150—175 процент таран тултарса пыраççĕ.

Рабочи Федоров юлташ—двухсотник. Вăл хăй шутласа тунă шаблонпа ĕçлесе, кулленхи нормăна 200—250 процент таран тултарса пырать. Унăн шаблонĕ ĕç тухăçлăхне 5 хут ÿстерме май панă. Халĕ артельри рабочисем пурте, Федоров юлташ шутласа тунă шаблонпа усă курса, пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле васкавлă заказсем енĕпе пĕрремĕш квартал планне тултарма обязательство илчĕç. Хăйĕн обязательствине срокра пурнăçлассишĕн артельри рабочисем социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

С. НАЛИМОВ.

Всевобуч боецĕсен ăмăртăвĕ пуçланчĕ

ШУПАШКАР. Хула военкомачĕ çумĕнчи вĕренÿ пункчĕсем çар ĕçне вĕренмелли программăна вĕçлесе пыраççĕ. Атăл леш енчи пункт всевобуч боецĕсен пĕрремĕш ушкăнне çар ĕçне вĕрентсе кăларчĕ. Вĕренÿ пункчĕн начальникĕ Селезнев юлташ тата политрук Зверев юлташ ĕççынниcене çар ĕçне вĕрентессине большевикла организацилерĕ. Планпа пăхниччен ирттерсе пункт 69 çынна ворошиловла тĕл пеме вĕрентсе хатĕрлерĕ.

ССР Союзĕн Оборона Халăх Комиссариатĕнчи Всевобуч енĕпе ĕçлекен Главнăй Управлени начальникĕн генерал-майор Н. П. Пронин юлташăн приказĕ тăрăх, всевобуч боецĕсен ăмăртăвĕ пуçланчĕ. Ăмăрту—всевобуч боецĕсемшĕн пĕлÿ тĕрĕслевĕ пулса тăрать. Çав ăмăртура боецсен хăйсем çар ĕçне вĕренсе çитнине кăтартса памалла.

Ăмăртăва ирттерме хатĕрленсе, вĕренÿ пункчĕсем тренировкăллă занятисен расписанийĕсене малтанах туса хучĕç. Çав расписанисем всевобуч подразделенийĕсенче ăмăртăва хатĕрленсе тренировкăллă занятисем ирттермелли çирĕп плансем пулса тăчĕç.

Шупашкар военкомачĕн хулари вĕренÿ пункчĕ ăмăртăва хатĕрленсе тренировкăллă занятисем ирттерме январĕн 25-мĕшĕнче тытăннă. Пĕтĕм ĕçе расписани тăрăх туса пынипе вĕренÿ пункчĕн нумай подразделенийĕсем, ăмăртăва хутшăнса, малтанхи кунсенчех паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Тренировкăллă занятисене туса ирттернĕ хыççăн февралĕн 3-мĕшĕнче командир Манин юлташ ертсе пыракан подразделени ăмăртăва хутшăнчĕ. Винтовкăна хăвăрт салатас тата пуçтарас тĕлĕшпе взводри боецсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Боецсенчен 94 процентĕ «отлично», 3 процент «хорошо», 3 процент «посредственно» паллăсем илчĕç. Подразделени пĕтĕмĕшпе огневой подготовка тĕлĕшпе «отлично» паллă илчĕ. Январĕн 4-мĕшĕнче комсомолецсен командир Бельцев юлташ ертсе пыракан подразделенийĕ ăмăртăва тухрĕ. Ăмăртура огневой подготовка енĕпе взводри кашни боец «отлично» паллă илчĕ.

Ăмăртура паха тĕслĕхсем кăтартассишĕн кашни боец, кашни командир тăрăшать. Боецсем хушшинче те, командирсемпе политруксем хушшинче те ку тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту сарăлсах пырать. Ăмăртăвĕн нормине тата кашни раздел тăрăх мĕнле ыйтăва татса парсан мĕнле паллă илме тивĕçлине кашни боецах ăнлантарса панă. Пулса иртмелли походсен маршручĕсене туса хунă. Анчах ăмăртăва хатĕрленес тата программа тăрăх хăвăртрах вĕрентсе çитерес тĕлĕшпе ĕçсем пур вĕренÿ пункчĕсенче те мар-ха пĕр пек ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Уйрăмах Чапаевски вĕренÿ пункчĕ хăйĕн ĕçне япăх туса пырать. Вĕренÿ пункчĕн начальникĕ Ситников тата комиссар Могутин юлташсем хăйсен ĕçне большевикла тимлĕхпе туса пымаççĕ. Боецсем занятисене час-часах сиктереççĕ, вĕсем хушшинче политикăллă-ăнлантаруллă ĕç çителĕклĕ мар, боецсен пĕлтерĕвĕсене йĕркеллĕн шута илсе пымаççĕ. Предприятисен руководителĕсем çар ĕçне обязательнăй йĕркепе вĕрентмелли закона пăсакансем пирки сахал интересленеççĕ.

Çавăн пекех ытти вĕренÿ пункчĕсенче те предприятисенче ĕçлекен хăшпĕр рабочисем йĕркеллĕн çÿремеççĕ. Сăмахран, эрех заводĕнче ĕçлекен В. Гущин, А. Чернов рабочисем занятисене теккекех сиктереççĕ, çавăн пекех Стройтрестра ĕçлекенсем—7 çын, типографире ĕçлекенсем—8 çын занятисене йĕркеллĕн çÿремеççĕ. Апла пулин те ку предприятисен директорĕсемпе парторганизацисен секретарĕсем хăйсен рабочийĕсем çар ĕçне мĕнле вĕреннипе сахал интересленеççĕ.

Б. МИХАЙЛОВ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Çĕнĕ Мăратри вĕренÿ пункчĕ ăмăртăва хатĕрленсе 15 километрлă йĕлтĕрлĕ поход туса ирттерчĕ. Походра всевобуч боецĕсем пурте пулчĕç. 15 километра пĕр сехет те пилĕк минутăра чупса тухса, вĕсем красноармеецсен нормине пачĕç.

Ф. СКВОРЦОВ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри вĕренÿ пункчĕсенче ăмăртăва хатĕрленнĕ май тренировкăллă занятисем пулса иртеççĕ. Пур вĕренÿ пункчĕсем те 5 километрлă йĕлтĕрлĕ походсем туса ирттерчĕç. Ăмăртăва тухма уйрăмах вăтам шкулсенчи çар ĕçне вĕренекен подразделенисем авăн хатĕрленеççĕ. Йĕлтĕрçĕсен кросĕнче малтанхи кун 180 çын пулчĕ.

Ăмăртăва организацилесе ирттерес тĕлĕшпе командирсемпе политработниксен инструкциллĕ канашлăвĕ пулса иртрĕ.

П. ХАРИТОНОВ.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Лашасене акана тухма хатĕрлет

ЕЛЧĔК. Ленин ячĕпе тăракан колхозри колхозник С. В. Катеров çиччĕмĕш çул ĕнтĕ конюх пулса ĕçлет. Çичĕ çул хушшинче вăл колхоза темиçе вуншар тиха çитĕнтерсе панă. Вăл пăхса пурăннă лашасенчен 12 лаша Хĕрлĕ Çар валли юрăхлă пулчĕç.

Халь вăл лашасене уйрăмах лайăх пăхать, çуракине тухма вăйлă та тĕреклĕ лашасем хатĕрлет.

А. УЛЕНДЕЕВ.

Татах та васкавлăнрах хатĕрленеççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. «Авангард» колхоз иртнĕ çулти çуракинче те кăтартуллă ĕçлерĕ. Кăçалхи çуракине колхоз татах та тимлĕирех хатĕрленет.

Çак иртнĕ кунсенче колхозниксем уя 450 лав тислĕк кăларчĕç, 15 центнер кĕл пухрĕç, 160 центнер вăрлăх сортларĕç.

«Восход» колхозра та çуракине хатĕрленеççĕ. Уйрăмах 2-мĕш бригадăн бригадирĕ Ф. Павлов тăрăшса ĕçлет. Ун бригади нумаях пулмасть 200 лав тислĕк уя кăларчĕ.

Ленин ячĕпе тăракан колхозра халь вăрлăхсене сортлаççĕ, уя тислĕк кăлараççĕ. Паянхи кун тĕлне тислĕк уя мĕнпурĕ 500 лав кăларнă.

Халь колхозсенче Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозăн членĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-яваççĕ.

А. КОСОЙКИН.

Пĕр ĕçе те манса хăвармаççĕ

КАЛИНИНО. Çуракине хатĕрленнĕ чухне Карачурари колхоз çулсеренех нимĕнрен малтан вăрлăхсене çителĕклĕ таран хатĕрлет, вĕсене лайăх сортлать, акана тухиччен лайăх пăхса усрать.

Кăçал та çавах — колхоз хăйне кирлĕ вăрлăхсене иртнĕ кĕркуннех хатĕрлесе хучĕ. Вĕсене пурне те сортланă, сортлама ĕлкĕрейĕмен пĕрçа вăрлăхне те çак кунсенчех сортласа ĕлкĕреççĕ.

Ытти енĕпе те колхоз çуракине вăйлăн хатĕрленет. Мĕнпур тислĕке куллен тата пĕтĕмпех уя кăларса тăраççĕ, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕсене пухаççĕ, машинăсене юсаççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçе комсомолецсемпе пионерсем те активлăн хутшăнаççĕ. «Новый путь» колхозра кашни пионер уйăх хушшинче 20-шер витре кĕл пухма пулчĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Паха вăрлăхсемшĕн

КУКЕÇ. Районри малта пыракан колхозсем иртнĕ çулти ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлесенех кăçалхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕç. Халь, колхозсенче Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явнă май, çуракине хатĕрленес ĕç вăйланчĕ.

Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхоз хăйĕн ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса çитерчĕ, уя 3 пин лав тислĕк кăларчĕ. Колхозра халь вăрлăхсене сортлаççĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ.

Лапсар ялсоветĕнчи «Путь Ленина», Шуркари «Победа» колхозсенче вăрлăхсене ятарласах уйăрнă çынсем тасатаççĕ. Солянково ялсоветĕнчи «Победа» колхозра вăрлăхсене сортласа пĕтерчĕç. Чăрăшкассинчи «Крахмал» тата Платкари «Красное Знамя» колхозсенче ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, вăрлăхсене тасатаççĕ.

Т. ЛОГИНОВ.

Татăкла обязательствăсем илчĕç

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Февралĕн 4-мĕшĕнче колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем республикăри мĕнпур колхозниксене чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. Тухса калакансем пурте Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне ырларĕç, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç.

Халĕ Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне пур колхозсенче те сÿтсе-явма тытăнчĕç. Матикасси колхозникĕсем Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне ырласа, Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне çуракине хатĕрленсе çитме пулчĕç.

Колхозăн вăрлăхсем çителĕклĕ. Вĕсене пĕтĕмпех сортланă. Хăйĕн ытлашши юлнă ясмăк вăрлăхне кунти колхозниксем вăрлăх çитмен колхоза парса пулăшма йышăнчĕç.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе Матикасси колхозникĕсем Чапаев ячĕпе тăракан колхоза социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне ытти колхозсенче те сÿтсе-явса, çуракине хатĕрленес енĕпе татăклă ĕçсем тăваççĕ.

АРТЕМЬЕВА.

Совхозра çуракине хатĕрленме тытăнман-ха

Шупашкар хула Совечĕн хăйĕн совхоз пур. Совхозăн задачисем пысăк — унăн хула ĕççыннисем валли пахча-çимĕçсем ÿстерсе памалла.

Совхоз хăйĕн ĕçĕсене, уйрăмăнах çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене, тивĕçлипе туса пымасть. Хула Совечĕ хăйĕн совхозĕ çинчен час-часах манса каять.

Пĕлтĕрех совхоз валли 30 пуç ĕне туянмалли çинчен калаçнă. Совхозăн хăйĕн выльăх-чĕрлĕх пулмалла, унсăрăн ĕçе ăнăçлăн туса пыма çук. Çав выльăхсене туянман-ха.

Совхоз çĕрĕ типĕ çĕр, ăна çулсерен çемçетмелле. Çемçетмешкĕн, паллах, тислĕк кирлĕ. План тăрăх совхозăн кăçал 2.000 лав тислĕк уя кăлармалла. Паянхи куна пурĕ те 400 лав çеç кăларнă.

Совхозăн кăçал помидор 10 гектар, купăста 12 гектар, хăяр 10 гектар лартмалла тата 1,5 гектаршар кишĕрпе сахăр кăшманĕ, 15 гектар çĕрулми лартса хăвармалла.

Çакнашкал пысăк ĕçсене тума пысăк ĕç вăйĕ кирлĕ. Совхоз директорĕ ку çинчен шухăшламасть — паян куна çитсе те колхозсемпе договорсем туман.

Колхозсем халь çураки планĕсене туса çирĕплетеççĕ. Колхозсенче кăçалхи çуракинче кашни çын, кашни лаша хăй вырăнĕнче пулмалла. Колхозсем совхоза ĕç вăйĕ тăратас енĕпе халь калаçса татăлмасан, хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче ун çинчен калаçма вăра кая юлать.

Пахча-çимĕç ĕрчетакен кирек мĕнле хуçалăхра та парниксем пулмалла. Вĕсем çук, тума та тытăнман.

Совхоз умĕнче ответлă задачăсем тăраççĕ. Совхоз директорĕн, унпа пĕрле хула Совечĕн халех çуракине хатĕрленес ĕçри тимсĕрлĕхе пĕтермелле, ВКП(б) горкомĕн те ку ĕçе хутшăнас пулать.

В. СЕМЕНОВ.

Колхозсем валли кадрсем хатĕрлетпĕр

ЧКАЛОВСКОЕ. Çĕнĕ Ахпÿртри Сталин ячĕпе тăракан колхозра çак иртнĕ кунсенче трактор ĕçне вĕренмелли курс организацилерĕç. Курса Каримов, тракторист ертсе пырать. Унта пурĕ 21 çын вĕренет. Пурте вĕсем тракторист профессине илессишĕн тăрăшаççĕ.

Занятисем эрнере икĕ хут пулаççĕ. Каримов юлташ хăй те трактор ĕçне авăн пĕлет, вĕрентессе те лайăх вĕрентет.

М. СУРКОВ.

* * *

ЭЛĔК. Мăн Тукташри Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра агротехника кружокĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Кунта вĕренме 47 колхозник çырăнчĕ. Занятисене вĕсем пурте вăхăтра пухăнаççĕ, тăрăшса вĕренеççĕ.

Н. СМИРНОВ,
С. РОМАНОВ.

ШАХАСАН. Шăхасан вăтам шкулĕнче вĕренекенсем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене тата ялхуçалăх ĕçĕсене программа тăрăх вĕренме тытăнчĕç. Малтанхи занятисенче трактора вĕренчĕç. А. Северов, В. Сорокин, Г. Андреев т. ыт. вĕренекенсем трактор пайĕсене питĕ лайăх вĕренсе çитрĕç. Çак çитес кунсенче тракторсене МТС мастерскойĕнче татах та тĕплĕрех вĕренме пуçлатпăр.

Вĕренекенсем пурте тимлĕн тăрăшаççĕ. Кашнин тракторпа ĕçлес кăмăлĕсем пысăк.

А. А.

* * *

ВĂРНАР. Районра нумаях пулмасть махорка акса тăвакансене вĕрентсе хатĕрлеме тытăнчĕç. Çак кунсенче махороведсен курсĕнчен 13 çын вĕренсе тухрĕ. Махорка акса тума пултаракан паха кадрсем хатĕрлекен курс малашне те ĕçлемелле. Унта татах та ытларах çынсем вĕренмелле.

Т. НИКИТИН.

Ялхуçалăх ĕçне вĕренесси шкулсенче

ВĂРМАР. Районри вăтам шкулсенчи аслă классенче ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренесси пуçланчĕ. Унччен районри çутĕç пайĕ вĕрентекенсене тупса çирĕплетнĕ. Вĕсемпе семинар туса ирттернĕ. Нумай çĕрте ялхуçалăх ĕçĕнчи специалистсем, МТС-ри механиксем ĕçлеççĕ. Кавал вăтам шкулĕнче ялхуçалăх ĕçне МТС механикĕ Ларин, Орнарта — Уливанов, Шăхальре — Чернов, Вăрмарта МТС-ăн аслă механикĕ Верхунов юлташсем вĕрентеççĕ. Пысăк Енкассинче ялхуçалăх ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе вăтам шкул директорĕ А. Васильева юлташ хăй ĕçлет, мĕншĕн тесен вăл ялхуçалăх академинчен вĕренсе тухнă.

Ялхуçалăх ĕçне вĕренмелли занятисенче вĕрентекенсем наглябнăй пособисемпе туллин усă кураççĕ. Ку вара ачасене программăри материала татах та лайăхрах ăнлама пулăшать. Нумаях пулмасть эпĕ Шăхаль вăтам шкулĕнче ялхуçалăх ĕçне вĕренмелли урокра пултăм. Учитель ачасене плугпа паллаштарчĕ. Унччен плуга яланах курнă пулин те, ачасем учитель каланине тимлĕн итлерĕç, ăнланманнисене ыйтса пĕлме тăрăшрĕç. Кайран, учитель плугăн пайĕсем çинчен ыйтсан, ачасем лайăх ответлерĕç, нумайĕшĕ «отлично», «хорошо» паллăсем илчĕç.

Ачасен ялхуçалăх ĕçĕнчи машинăсене вĕренсе çитсе, вĕсемпе хăйсен ĕçлес кăмăлĕ пит пысăк.

Февралĕн 9-мĕшĕнче ялхуçалăх ĕçне вĕрентекенсен иккĕмĕш семинарĕ пулать. Семинар «трактор тата унăн пайĕсем», «пирĕн районри тăпрасем» ятлă темăсемпе пулса иртет. Унта МТС-ăн аслă агрономĕ В. В. Петров юлташ доклад туса парать.

Е. ЕФИМОВ.
Çутĕç пайĕн заведующийĕ.

шах çакăн пек пулкалать. Агитатор малтанах калаçу хунă çурта пырса кĕрет. Унта пĕтĕмпе 6—7 килхуçи хĕрарăмĕ пуçтарăннă пулнă, тейĕпĕр. Анчах та вĕсенчен пĕри е иккĕшĕ анчах пынă. [illegible]

[illegible]

Пирĕн агитаторсем пур çĕрте те ăнлантарса калаçу [illegible]

сăк агитаци çакăн пек тĕрлĕ формăсемпе усă курма пĕлмесĕç.

Пирĕн активистсем час-часах хаçат-журналсем çителĕклĕ марри çинчен [illegible]

[illegible]

Большевиклă агитаци вăл — халăх [illegible]

С. ИСЛЮКОВ.
ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ.

Совет информаци бюровĕнчен

Февралĕн 7-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

нă. Халĕ 4—5-шер машина çеç юлнă. Артиллерие 40 процентран кая мар çухатнă».

* * *

Нимĕçсен 297-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 523-мĕш полкри 10-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Фридрих Бауэр çапла каласа панă: «Каялла чакнă чухне хăшпĕр салтаксем выртаççĕ е малалла каяççĕ. Ыттисем вара тĕрлĕ сăлтавсем тупса пӳрtсенчех юлаççĕ, вырăссем килессе кĕтсе илеççĕ те кайран тыткăна парăнаççĕ. Çапăçу вăхăтĕнче халĕ ĕнтĕ офицерсем малта пымаççĕ, эпир ахаль те сахаллăн тăрса юлтăмăр, теççĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Смоленск облаçĕнчи Думинически районри Речица ялĕнчи мирлĕ халăха çавтори тискеррĕн асаплантарса тунă преступлени çинчен командирсен, политработниксен тата красноармеецсен группи акт çырнă. Актра çапла пĕлтернĕ: февралĕн 1-мĕшĕнче Будские Выселки ялĕ çине контратака тунă чухне нимĕçсем, персе вĕлерессипе хăратса, Речица ялĕнче пурăнакансене хăйсен наступлени туса пыракан чаçĕсем умĕнче хăвалаласа пынă. Совет мирлĕ çыннисем, старриксемпе хĕрарăмсем тата ачасем, пирĕн позицисем патне çывхарса çитсен, совет боецĕсене: «Перĕр, пирĕн хыçра нимĕçсем», тенĕ. Çакăн хыççăн нимĕçсем мирлĕ халăх çине автоматсенчен пеме пуçланă та çаксене вĕлернĕ: Юркова Анна—14 çулта, Жуковская Софья Иосифовна—42 çулта, унăн ывăлĕсем Геннадий—15 çулта тата Валентин—13 çулта, Зарабуркин Иван Степанович—59 çулта, Шишкина Евдокия Игнатьевна—45 çулта тата унăн ывăлĕ Юрий—8 уйăхра. Акт çине Н-ски полкри командирсем, политработниксем тата боецсем Рятузов, Гусаров, Козлов, Панов тата ыттисем те (пĕтĕмпе 15 çын) алă пуснă.

* * *

Шлохаура (Германия) çар сучĕ пĕр хĕçпăшаллă группăн ĕçне пăхса тухнă, çав группа продовольстви склачĕсемпе магазинсем çине, çавăн пекех тата вырăнсенчи полици управленийĕсемпе штурмовой отрядсен штабĕсем çине тапăннă. Группа участникĕсем хушшинче Германи çарĕн 8 салтакĕ тата пĕр офицерĕ пулнă.

Тăванла пулăшу

КИРОВ, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Шурмински районри (Киров облаçĕ) Тельман ячĕпе тăракан колхоз членĕсем СССР Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ 1942 çулти январĕн 6-мĕшĕнче панă нотăран гитлерла бандитсем Мускав облаçĕн Высоковски районĕнчи Некрасово ялне, халĕ нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнăскерне, вут тивертсе çунтарса яни çинчен пĕлнĕ. Колхозниксем Некрасово ялĕнчи çынсене пулăшу пама шут тытнă, вĕсем валли колхозниксем 10 центнер çĕрулми, 5 центнер тырă, 3 пăру, 2 сурăх, 3 сысна çури уйăрса хунă. Кунсăр пуçне, кашни колхоз килĕ кĕпе-тумтир, кипте тыткаламалли ытти япаласем параççĕ.

Колхозниксем Некрасово ялĕнчи çынсем патне çыру янă. Çырăва Нижне-Шурмински ялсоветне кĕрекен пур ялхуçалăх артелĕсен председателĕсем те алă пуснă. Çырура çапла каланă:

«Эсир нимĕçсен ирсĕрĕсенчен инкек курнине эпир пĕлтĕмĕр. Эпир сире хăвăрăн хуçалăхăра йĕркелеме пулăшас тесе, сирĕн яла шефа илме йышăнтăмăр. Сире мĕн çитменнине тĕплĕн çырса пĕлтерĕр. Сире тăванла пулăшу пама тăрăшатпăр.

Хаклă тăвансем! Эсир питĕ нумай асапа инкек тӳсрĕр. Совет халăхĕ вăл — тăванла çемье пулнине, инкекре сире пулăшу памасăр хăварас çуккине асра тытăр. Совет халăхĕ сире хăвăрăн хуçалăхăра йĕркене кĕртсе ура çине тăратма пулăшĕ».

Тельман ячĕпе тăракан колхозăн пуçаравĕ çумне районри ытти колхозсем те хĕрӳллĕн хутшăнчĕç. Фашистла варварсенчен инкек курнă çынсене пулăшу пама колхозсем выльăх-чĕрлĕхсем, продуктсем уйăрса хураççĕ. Ку вăхăтчен 8 ĕне, хĕл каçнă 16 пăру, 25 чĕчĕ пăрăвĕ, 62 сурăх, 12 сысна, 29 сысна çури, 120 центнер тĕштырă, 170 центнер çĕрулми тата ытти продуктсем те уйăрса панă.

Уйăхлăхăн итогĕсем

Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсем ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене пуçтарса юсас тĕлĕшпе уйăхлăх туса ирттерчĕç.

Ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене республикăри 1500 колхозра тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕслӳ чылай колхозсенче машинăсем унта-кунта тирпейсĕр сапаланса выртнине кăтартрĕ. Хăшпĕр колхозсенче, сăмахран, Кувакино районĕнчи «Красный Октябрь» ялхуçалăх артелĕнче 3 плуг уйрах ларнă. Уйăхлăх вăхăтĕнче комсомолецсем вĕсене илсе кĕрсе юсанă. Ку ыйтăва бригадăри колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явнă, айăплисене уншăн ответ тыттарнă.

Тĕрĕслӳ хăшпĕр колхозсем ку таранччен те ялхуçалăх машинисене юсама тытăнманнине кăтартрĕ. Çавăнпа машинăсене юсама комсомолецсем хăйсем тытăнчĕç, ку ĕçе çамрăксене тата опытлă колхозниксене явăçтарчĕç.

Уйăхлăх вăхăтĕнче комсомолецсене ялхуçалăхĕнчи çамрăк специалистсем нумай пулăшрĕç. Комсомолăн колхозсенчи организацийĕсене ĕçре пулăшас тĕлĕшпе райцентрти активистсене уйрăм организацисем çумне çирĕплетнĕ. Сăмахран, Калинински районра 35 комсомолец, Сĕнтĕр районĕнче 24 комсомолец уйăхлăх пĕтиччен колхозсене тăтăшах кайса тăнă.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕç пит начар пынă колхозсенче ятарласа комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем организациленĕ. Тимĕрçĕсене пулăшма вĕсем патне комсомолецсене çирĕплетнĕ.

Çапла вара комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕпе республикăри колхозсенче 7.441 плуг, 8.518 сӳре, 925 сеялка, çурлаки вăхăтĕнче кирлĕ ытти тĕрлĕ машинăсемпе инвентарьсене 782 япала юсанă.

Машинăсене юсас тĕлĕшпе уйрăмăнах комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем аван ĕçлерĕç. Шăхасан районĕнче çавăн пек бригадăсем 21 бригада пулнă, вĕсенче 124 комсомолец тăнă. Оженарти Калинин ячĕпе тăракан колхозра комсомолецсем ялхуçалăх машинисене юсаса, тирпейлесе лартнă. Кузнецов комсомолец унта тимĕрçĕ пулса ĕçлет Вăл январĕн 5-мĕш тĕлне 28 плуг, 6 сеялка, 28 сӳре юсанă.

Киров ячĕпе тăракан колхозра (Шăхасан р-нĕ) ялхуçалăх машинисем сапаланса выртнă пулнă. Комсомолецсем ун çинчен пухура сӳтсе-явнă, унтан вĕсене тирпейлеме, юсама хăйсем çине обязательство илнĕ. 4 комсомолеца — юсама, ыттисене—машинăсене пуçтарса, тутăхран тасатма хушнă. Комсомолецсем: Даншлов — 5 йывăç сӳре, Никонов — 14 сӳсмен, 10 йĕнерчĕк, Петров — 8 сӳре, пĕр сеялка юсанă.

Кувакино районĕнчи «12 лет Октября» колхозри комсомолецсемпе çамрăксен бригадин членĕсем Ванюхинпа Юдин юлташсем ялхуçалăх машинисене юсанă чухне нормăна 250—300 процент тултарса ĕçлерĕç. Вĕсем пĕр уйăх хушшинче кашни кунах 3,5 ĕçкунĕ туса пычĕç. Пурĕ 6 сеялка, 17 сӳре, 8 плуг юсарĕç.

Элĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри комсомолецсем (организацин секретарĕ Степанов юлташ) 6 сӳре тата темиçе плуг юсанă. Комсомолец-платниксем (çав специальноçа 1941 çулта туяннăскерсем) çĕнĕрен 3 урапа тунă. Çав вăхăтра пĕр комсомолеца тимĕрçĕ çумне çирĕплетнĕ. Вăл халь тимĕрçĕ ĕçне вĕренет.

Шупашкар районĕнчи «Крахмал» колхозри комсомолецсемпе çамрăксен бригади уйăхлăх вăхăтĕнче 20 плуг, 12 сӳре, кӳлмелли хатĕрсем 16 комплект юсанă.

Çĕрпӳ районĕнчи «Союз» колхозри комсомолецсем (организацин секретарĕ Назарова юлташ) ялхуçалăх машинисене тĕплĕн йĕркелерĕç. Г. Порфирьев комсомолец нумаях пулмасть тимĕрçĕ ĕçне вĕренсе çитрĕ. Вăл хăй пĕччен 15 плуг юсанă.

Чкаловски МТС-ри комсомолецсем тракторсене юсас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Табакова Андреева комсомолкăсем нормăна 150-шар процент тултарса ĕçлеççĕ.

Шăмăршă МТС-че тракторсене юсас тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен ятарласа организациленĕ бригади ĕçлет.

Етĕрне районĕнче уйăхлăх вăхăтĕнче машинăсене юсасси колхозсенче тимĕрçĕсем çителĕксĕр пирки юлса пынине палăртнă. Çавăнпа та 6 комсомолеца опытлă тимĕрçĕсем патне вĕренме çирĕплетнĕ.

Республикăра тимĕрçĕсем татах те нумай кирлĕ-ха. Комсомолăн ытти организацийĕсен те ку ĕçе йĕркелемелле.

Ялхуçалăх машинисене пухса юсас тĕлĕшпе ирттернĕ уйăхлăх Калинински, Çĕрпӳ, Шупашкар районĕнче организованно иртрĕ. Калинински районра ку ĕçе 1459 çын хутшăннă, вĕсенчен 428 комсомолец. Вĕсем 18 плуг, 42 тимĕр сӳре, 417 йывăç сӳре, кӳлмелли хатĕрсем 156 комплект, 100 тилхепе, 86 пĕкĕ, 308 урхалăх юсанă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи комсомолецсем уйăхлăх вăхăтĕнче 732 плуга татсатса йĕркеленĕ, 183 плуг, 73 сеялка, 383 сӳре юсанă. Машинăсене юсама заводсенчен, артельсенчен 14 тимĕрçе колхозсене янă.

Комсомол организацийĕсем хăйсен ĕçĕсем çинчен пухусенче сӳтсе-явнă. Унта колхоз председателĕсемпе бригадирсем те пулнă. Машинăсене юсас ĕç начар пыракан колхозсенче колхозниксен пухăвĕсенче те сӳтсе-явнă, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăннă.

Халь республикăри комсомолецсем ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе вĕçне çитерес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ, запас выртакан пайсемпе инвентарьсене пухаççĕ. Комсомол организацийĕсен ку ĕçе те организованно ирттерессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлемелле.

А. КУЗНЕЦОВА.

ВЛКСМ Обкомĕн хресчен çамрăкĕсен отделĕн заведующийĕ.

Англи, Совет Союзĕ тата Иран хушшинчи договор пирки Иден тунă заявлени

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден общинăсен палатинче официальнăй йĕркепе çакна пĕлтернĕ: Англипе Совет Союзĕ тата Иран хушшинчи договора Иранăн меджлисĕ ырланă, ăна алă пуссанах вăл вăя кĕнĕ. Иден çапла каланă: «Договора Иран меджлисĕн нумайрахăшĕ ырлани Иран халăхĕн малта тăракан представителĕсен шухăш-кăмăлĕсене кăтартса парать. Договор тăвакан енсем ку тĕлĕшпе нумай вăхăт хушши пысăк тӳсĕмлĕхпе калаçусем туса пынă. Договорта нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăра кирлĕ майсене асăнса çырнă, çав шута Иран çĕршывĕ урлă войскăсемпе боеприпассем турттарма ирĕк паракан правăсем, çулсене юсавлă тытса тăма, вĕсене лайăхлатма тата цензурăпа тĕрĕслесе тăма ирĕк паракан правăсем кĕреççĕ». Эпĕ тата çакна кăтартса парасшăн, — тенĕ Иден, — Англин тата Совет Союзĕн правительствисем договорта хăйсем çине палла обязательство илнĕ. Çав обязательство вăл — Иран территорийĕн тĕрĕс-тĕкеллĕхне, суверенитетне тата политикăллă никама пăхăнманлăхне пăсмасăр çирĕп тытса тăни пулать. Союзлă правительствăсен иккĕшин те çак принципа хирĕçлекен шухăшсем пачах та çук.

Гитлер хăйĕн планĕсем арканса кайнине йышăнни çинчен Швецири хаçатсем мĕн çыраççĕ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Швецире тухса тăракан хаçатсем Гитлерăн 1942 çулти январĕн 30-мĕшĕнче тухса каланă юлашки сăмахĕн тарăхуллă та шикленӳллĕ характерне кăтартса пАраççĕ. Хаçатсем уйрăмах çакна палăртаççĕ: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче хăйĕн планĕсем арканса кайнă пирки Гитлер хăй хытах пăшăрханнине пытарса хăварма пултарайман,—теççĕ.

«Гитлер 1942 çул мĕнле вĕçленессине пĕлмест»,—тесе çырать «Арбетарен» хаçат. «Дагенс нюхетер» хаçат çапла палăртать: Гитлер хăйĕн сăмахĕнче нимĕçсен çухатăвĕсем тĕлĕшпе цифрăсем кăтартса паман пулин те, çапах та унăн сăмахĕнче Германи çарĕ питĕ пысăк çухатусем тӳснине кăтартакан асăрхаттарусем пур. Çакăнпа пĕрлех Гитлер фашизмăн ĕçĕсем ĕлĕк кăна мар ăнăçсăр пулса пынине, ăнăçсăрлăхсем ăна малашне те кĕтсе тăнине ăнланса илме май пачĕ.

«Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче хĕл нимĕçсене питĕ пысăк йывăрлăхсем кӳнине,—тесе çырать «Социал демократен» хаçат,—Гитлер текех пытармасть. Çавнашкалах тата вăл çак çул мĕнле вĕçленессине пĕлменни çинчен те каласа пачĕ. Унăн сăмахĕсем хушшинче вăрçăн тепĕр хĕлĕ персе çитессине, çав хĕл çĕнĕ испытанисем кӳрессине сиссе пĕлме пулать».

«Арбедат» хаçат çапла çырать: «Политика тĕлĕшĕнчен илсен, Гитлерăн юлашки сăмахĕ чи вăрамми, чи пăтранчăкки пулса тăрать». Гитлер тупа туса каланисенче,—тесе палăртать хаçат малалла,—Германи халăхĕшĕн, часах мир пуласси çинчен Гитлертан темиçе хут та илтнĕскершĕн, савăнăç ытлашши нумаях мар.

Германире ĕç вăйĕ питех те çителĕксĕр

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Швецире тухса тăракан «Социал демократ» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германири авторитетлă çынсем каланă тăрăх, Германире, производство чакнă пулин те, ĕç вăйĕ çителĕксĕрри халĕ те ĕлĕкхи пекех питех те çивĕчĕн палăрать. Çакăн пирки ĕнтĕ Германи правительстви ĕç министерствин статс-секретарне Мансфельда Германири предприятисенче ирĕксĕрлесе ĕçлеттермешкĕн оккупациленĕ çĕршывсенчи халăха пĕр чарусăр мобилизациleме ирĕк панă.

Мансфельд «Чехия тата Моравия протекторатра» рабочисене ирĕксĕрлесе пухма тытăннă та. Гитлерла «Франкфуртер цейтунг» хаçат нумаях та пулмасть: ютçĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисем Германире хăйсен ĕç условийĕсемпе питех те килĕшмеççĕ, тесе кăтартса панă.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 5-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германире ĕç вăйĕсем питех те çителĕксĕррине пула, нимĕçсем туберкулезпа чирлекен çынсене те ĕçлеттереççĕ. Ерекен формăллă туберкулезпа чирлекен рабочисене вĕсем ютçĕршывсенчен илсе килнĕ рабочисемпе çеç хутшăнма пултаракан ĕçсене яраççĕ.

Чехословаки халăхĕ Гитлера парăнмасть

ЖЕНЕВА, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Прагăри çĕнĕ «правительствăра» «çутĕç министрĕ» пулса ĕçлеме нимĕçсем Гитлера сутăннă Моравеца лартнă. Моравец нумаях пулмасть хаçатра хăйĕн статьине пичетлесе кăларнă. Вăл унта çакна ирĕксĕрех йышăнать: Гейдрих туса ирттернĕ юнлă репрессисем хыççăн та чех халăхĕ нимĕçсен пусмăрне хирĕç тăма пăрахман, чех халăхĕн кĕрешес шухăш-кăмăлĕ пĕрре те чакман.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерӳсем Чехословаки халăхне питех те хавхалантараççĕ, халăхăн патриотла çĕкленӳне вăйлатса пыраççĕ, ирĕке тухас кун çывхарса килнине ĕненсе тăрас шанчăка çирĕплетеççĕ. Гейдрихăн Прагăра тухса тăракан официозĕ «Дер Нейе Таг» хаçачĕ çак кунсенче çапла ӳпкелешсе çырнă: юлашки вăхăтра нимĕçсен «протекторатри» учрежденийĕсене нимĕçсене хăратакан вăрттăн çырусем ытларах та ытларах килсе тăма пуçланă. «Часах акă вырăссем сире ним хăвармичченех çĕмĕрсе тăкаççĕ, унтан вара эпир сире ним хĕрхенмесĕр тавăрас черет çитет», — тесе çырнă çавăн пек çырусенчен пĕринче.

Францири пăлханусем

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). «Дейли экспресс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Сетра (Кăнтăрти Франция) выçлăх пирки пăлхавсем пуçланса кайнă. Курнă çынсем каласа панă тăрăх, хулан тĕп урамĕсенче кункаçах демонстрацисем пулса пынă. Продовольстви çитменни пирки пуçланса кайнă пăлхавсенчен политикăллă пысăк демонстрацисем пулса тăнă. Нумай çынсене арестленĕ. Демонстраци тăвакансем хушшинчен Виши правительствине хăратса, де-Голле саламласа кăшкăрнă сасăсем илтĕннĕ.

Пăлханусем çакна пула пуçланнă: хулана илсе пынă продовольствие перемири комиссийĕ нимĕçсемпе итальянецсен аллине панă пулнă, çакăн пирки вара халăх тарăхса кайнă.

Амстердамра вăрçăри пек положени туса хунă

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). «Стокгольмс тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Амстердамра Германие хирĕç тăвакан демонстрацисемпе саботажсем çăвтери сарăлса кайнă пирки, унта вăрçăри пек положени туса хунă. Хулари халăха 20 сехет иртнĕ хыççăн хулана тухма чарнă. Трамвай 19 сехетре çӳреме чарăнать. Нумай çынсене арестлеççĕ.

Гитлеровецсем Греци халăхне вĕлерсе пĕтереççĕ

ВАШИНГТОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Грецин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи посольстви пĕлтернĕ тăрăх, Грецири лару-тăру кунран кун йывăрланнăçемĕн йывăрланса пырать. Çĕршыври халăха çавтери кĕлмĕçлентерсе хăварнă. «Хура рынокра» та продовольстви пĕтсе çитнĕ. Афинăра кунсеренех выçăпа нумай çĕршер çынсем вилеççĕ.

Выçăхса çитнĕ, сивĕпе чĕтрене ернĕ грексен ушкăнĕсем хула урамĕсем тăрăх, урама сарнă чулсем хушшинче шăтса тухнă курăксене татса çисе, сулланса çӳреççĕ. Кăмрăк запасĕсем пĕтĕмпех пĕтнĕ. Çакна пула промышленность предприятийĕсемпе чугун çулсем ĕçлеме чарăнаççĕ.

Грецири пысăк квалификациллĕ пур рабочисене те вăйпах Германие ăсатни, ыттисем выçăпа вилсе пыраççĕ.

Ку вăхăтчен партизанла движени Грецин çурçĕрти пайĕнче пуринчен ытларах сарăлнă пулнă. Халĕ ĕнтĕ партизанла движени ытти районсене те сарăлса пырать. Тусем çинче тытăнса юлнă Англи войскисен юлашкийĕсем Грецири партизансемпе пĕрле кĕрешеççĕ.

Гарриман Америкăна таврăннă май

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рузвельтăн Англири официальнăй представителĕ Гарриман çапла каласа панă: Лăпкă океан çинчи положение пула Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен нумай вăй хурса тăрăшма лекет пулин те, Америка Англие тата ытти çĕршывсене пулăшу парасси ӳсĕççĕмĕн ӳсе пырать, тенĕ.

Турцин суту-илӳ делегацийĕ Басрăна çитнĕ

АНКАРА, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Турция Америкăра тата Англире илнĕ таварсене, халĕ Басрăра (Ирак) тăраканскерсене, Турцие ăсатас ĕç мĕнле тăнине вырăнта тĕпчесе пĕлмешкĕн Турцин суту-илӳ делегацийĕ Басрăна çитнĕ. Делегаци çав таварсене хăвăртрах Турцие ямалла тăвас тĕлĕшпе те кирлĕ мерăсене йышăнма шутлать.

Англири лордсен палатинче Индири лару-тăру çинчен сӳтсе-явни

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви лордсен палатинче Индири лару-тăру ыйтăвне сӳтсе-явни çинчен пĕлтерет. Çак ыйтăва лорд Фарингден кăларса тăратнă. Вăл çапла каланă: Индири лару-тăру çивĕчленсех пырать, çак чи кирлĕ ыйтусенчен пĕрне татса парас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Фарингден каланă тăрăх, Инди халăхĕ ӳпкелешнин сăлтавĕсенчен пĕри вăл — «Индие индустрилес ĕçе Англи промышленникĕсен çăткăнлăхĕ кансĕрлесе тăни» пулса тăрать.

Çакă питех хурлантарать, — тенĕ Фарингден,—Англи правительстви Индие самоуправлени парас тĕлĕшпе конкретнăйрах формăла сăмах пама пултараймасть. Премьер-министр Атлантика хартийĕ Индие тивĕçмест тесе каланине Индире хапăл туман.

Премьере тухса каланă çынсене ответ парса, Индипе Бирма ĕçĕсен министерствин парламентри секретарĕ герцог Девонширский çапла каланă: Индире вăрçă пирки тăвакан ĕçсем вăрçăччен шухăшласа хунинчен нумай сарлакарах пулса пыраççĕ. Инди войскисем хăйсен хастарлăхне ĕнтĕ вăрçăн нумай участокĕсенче кăтартрĕç, тенĕ. Малалла Девонширский çакна кăтартса панă: Инди ыйтăвне пĕтĕмĕшпех мĕнле татса парассине «вице-королĕн 1940 çулти августра тунă декларацийĕнче кăтартса панă; унта каланă: Англи правительствин тĕллевĕ—Индие доминионсен пĕтĕм статутне парасси пулса тăрать, тенĕ тата унта Индие империн ĕçĕсене туллин тата пĕртан йĕркепе хутшăнса ĕçлеме право пама пулнă», тенĕ.

Египетăн çĕнĕ правительстви

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, вафдистсен партин лидерĕ Мустафа Нахас-паша çĕнĕ кабинет тунă. Çĕнĕ кабинета пур партисен представителĕсене те кĕртнĕ. Çĕнĕ кабинетра Нахас-паша пĕр вăхăтрах премьер-министр, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ тата шалти ĕçсен министрĕ пулса ĕçлет.

Снабженин, коллективлă оборонăн тата обществăллă ĕçсен министерствисем пулаççĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Египетăн çĕнĕ премьер-министрĕ Нахас-паша парламента салатса ярасси çинчен пĕлтернĕ. «Эпир çĕршыва ирĕклĕн суйланă парламент урлă тытса тăма пулатпăр»,—тенĕ вăл. Нахас-паша Египет халăхне çакна шантарса каланă: эпĕ Англипе Египет хушшинчи договора, иккĕ çĕршывсен интересĕсене те сыхласа, ырă кăмăллăн пурнăçа кĕртсе тăрăп, тенĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: японецсем Манила заливĕн кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕнче хăйсен артиллерине вырнаçтарса лартнă. Вĕсем кунтан Америка войскисен опорнăй бази пулса тăракан Корретидор утравĕ çине пеме шухăшланă. Анчах та Америкăпа Филиппин войскисем Японин артиллерине пусарса лартнă, унăн позицийĕсене çĕмĕрсе тăкнă.

Лингайен заливĕнчи портсенче Японин транспорчĕсем çĕнĕ подкреплениисем антарса хăвараççĕ, вĕсем кунтан фронтăн Батаан участокĕ çине каяççĕ. Юлашки 24 сехет хушшинче кунти çапăçусем лăпланнă пек пулнă.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Англи командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Сингапур районĕнче иртнĕ талăк хушшинче вăрçă тĕлĕшпе палăрмалла улшăнусемех пулман. Англи артиллерийĕ малтанхи пекех Джохор Бату районĕнче Японин чаçĕсем çине персе тăнă. Японецсем Сингапур утравĕн çурçĕр çыранĕ çине персе тăнă.

Салвин юханшывĕн районĕнче юлашки талăк хушшинче вăрçă ĕçĕсем лăпланнă пек пулнă. Англи артиллерийĕ японецсен юханшывăн сулахайри позицийĕсем çине персе тăнă. Японецсем кун каçиччен Мартабан хули çине персе тăнă. Çапах та нимĕнле ишĕлӳсемпе жертвăсем те çук.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Борнео утравĕ çинчи Самаринда хулине японецсем оккупациленĕ. (Ку хула Балик-Папанран 60 мильăна яхăн çурçĕр еннерех ларать). Ява утравĕн чылай районĕсенче Япони самолечĕсем разведкăллă вĕçевсем тунă. Ĕнер японецсем Сурбая хули çине (Ява утравĕ) бомбăсем пăрахнă. Сывлăшри çапăçура японецсен 2 истребителĕпе 2 бомбардировщикĕ пĕтнĕ. Голланди Индийĕн авиацийĕ 3 самолет çухатнă.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, Япони бомбардировщикĕсем Голланди Индийĕн «Ява» йышши пĕр крейсерне путарнă тата Америкăн «Марбл Хенд» йышши крейсерне сиенленĕ. Çавăн пекех тата противникăн 5.000 тонна водоизмещениллĕ пĕр суднине путарнă.

Англи авиацийĕн Ливири тата Вăтаçĕр тинĕс çинчи ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Дерна районĕнче Англи истребителĕсем вĕçсе пырса тапăннипе тăшман чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ. Дернăран хĕвеланăçнелле выртакан районра противникăн колоннисем хушшинче пушарсем курăннă. Февралĕн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Бенгази, Барка тата Бенина районĕсенчи тĕрлĕрен объектсем çине бомбăсем пăрахнă.

Февралĕн 4-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Сицили çине вĕçсе пырса тапăннă. Пăрахнă бомбăсем Каринирен инçех мар пыракан таварлă поезд çине ӳксе ăна çĕмĕрнĕ.

Противникăн самолечĕсем Мальта çине вĕçсе пыра-пыра тапăннă. Противникăн бомбардировщикĕсен пысăк группин çулне пӳлсе лартса, Англи истребителĕсем темиçе бомбардировщике сиенленĕ.

Ютçĕршывсенче

▲ Германи оккупациленĕ çĕршывсенче халĕ оккупантсен террорĕ татах та вăйланрах сарăлса пыма пуçланă. Бельгире Германие хирĕç ĕçленĕшĕн айăпласа 4 çынна вĕлермелле приговор йышăннă. Парижра «тăшмана активлăн пулăшнăшăн» 2 француза персе пăрахнă. Польшăра «Германи колонисчĕ çине тапăннăшăн» Болеслав Баргоновский рабочие вĕлермелле приговор йышăннă. Норвегире Англие тарма хăтланнăшăн 3 çынна вĕлернĕ. Пловдивра (Болгарире) саботаж тунăшăн 6 çынна вĕлермелле суд тунă. Çакăн пек сăлтавсемпех айăпласа, 18 çынна 15-шер çул таран тĕрмене хупмалла суд тунă.

▲ Албанире партизансен кĕрешĕвĕ палăрмаллах вăйлăланса пырать. Партизансем çĕршывăн нумай районĕсенче кĕрешеççĕ. Партизансен хăшпĕр отрячĕсене Албани çарĕн офицерĕсем ертсе пыраççĕ. Нумаях та пулмасть партизансем Тиранăран 10 миля аякках ларакан ял çине тапăннă та Италин 10 салтакне вĕлернĕ.

▲ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Бразилие, Эквадора, Колумбие, Боливие тата Панамăна каучук плантацийĕсем уçмашкăн укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен пулăшу парса пыраççĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче гвайюлăран каучук тăвасси, синтетически каучук туса кăларасси сарăлса пырать.

Пăр хĕстерсе лартнă суднăсене çăлни

БАКУ, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Каспий тинĕсĕн çурçĕр пайĕнче, Буйнак мысĕ патĕнче 11 баллă çил-тăвăл кĕрленĕ. Çанталăк питĕ сивĕ тăнă. Сасартăк пăр куçма тытăннă та, çак районра иртсе пыракан суднăсен караванне пăр хĕстерсе лартнă. Караван инкек тӳсни çинчен панă сигнала Голубев юлташ капитан пулса ертсе пыракан танкер, инçех те мар иртсе каяканскер, илтнĕ.

Танкерăн пăра çĕмĕрмелли нимĕнле хатĕр те пулман, ăна хăйне те пăр хĕстерсе лартма пултарнă. Анчах çапах та Голубев капитан инкек тӳсекен карапсене пулăшу пама кайма шут тытнă. Каспий тинĕсĕнчи флотăн управленийĕпе çыхăнса калаçнă хыççăн вăл хăйĕн суднине пăр ярăмне илсе кĕрсе кайнă.

Хастарлă ĕç темиçе кун хушши пынă. Танкер команди карапсене çăлса кăларас тĕлĕшпе нумай вăй хурса ĕçленĕ. Хăюллă моряксен ĕçне пула тата ăста маневрсем тунине пула карапана пăр ăшĕнчен чиперех, нимĕн сиенлемесĕрех илсе тухма май килнĕ.

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Цзянси провинцин çурçĕр пайĕнче Китайăн Наньчан районĕнче кĕрешекен войскисем Япони гарнизонĕсене атакăласа хăйсен активлăхне вăйлăн палăртаççĕ. Хунань провинцин çурçĕр пайĕнче Китай войскисем наступлени сарса янă та Ичжоу районĕнче 3 хула йышăнса илнĕ.

Кăнтăр Китайра çапăçусем Кантонтан хĕвелтухăçнерех, Вейчжоу-Боло районĕнче пыраççĕ. Китай войскисен сылтăм флангĕнче хытă хĕссе, японецсем Боло хулине йышăннă. (ТАСС, февралĕн 5-мĕш).

Отв. редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Çамрăк сулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 648 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. б. 58_84 п. л.